им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июнь 13 шăматкун
№ 114 (9023)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
И. Авдяков. — Комбайнсене лайăх юсамалла (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: **А. Тукмаков.**—Парти райкомĕн пленумĕ комсомол организацийĕсен ĕçĕсем çинчен (2 стр.).
И. Сидоркин.—Совет аппаратĕнче тимлĕхе ÿстерес пирки (2 стр.).
КАШНИ КОЛХОЗРА СИМĔС КОНВЕЙЕР ПУЛТАР: **Н. Рыбаков.**—Тутă выльăх-чĕрлĕх пысăк тупăш парать. **Ю. Шапошников.**—Симĕс конвейерпа усă куратпăр. **П. Николаев.**—Сысна ĕрчетмелли плана иртттерсе тултарнă (3 стр.).
Польшăра производствăлла çĕрĕç кооперативĕсен хисепĕ ÿсет (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем (4 стр.).
Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ (4 стр.).
Китайри халăх представителĕсей вырăнти пухăвĕсен суйлавĕ (4 стр.).

Малта пыракан опыта анлăн сарар

Совет халăхĕ хушшинче талантсем иксĕмсĕр çăлкуç пек тапса тăраççĕ. «Пирĕн халăх — тет Г. Маленков юлташ—хăйĕн творчествăлла пуçарулăхĕпе, тавçăрулăхĕпе, изобретенисем тума пултарнипе тахçанах чапа тухнă».

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем, И. В. Сталин юлташăн генийлĕ произведенийĕ совет çыннисен политикăлла активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне çĕнĕ хăватпа вăйлатрĕç. Предприятисенче, стройкăсенче, колхозлă ялта — халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те—пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн, Тăван çĕршыва малалла чечеклентерессишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ.

Совет çыннисем хăйсен опытĕнчен куллен çакна курса вĕренеççĕ: производствăна тĕрĕс организацилени, çĕнĕ техникăпа усă курни, рационализаторла сĕнÿсемпе изобретенисем яланах ĕçе çăмăллатаççĕ, халăх пурнăçне лайăхлатаççĕ. Социализм строительствин пур участокĕсенче те ĕççыннисен творчествăлла пуçарăвĕн тĕслĕхĕсем çав тери нумай, вĕсем производствăна пĕрмаях ÿстерсе, лайăхлатса пыма пулăшаççĕ. Производство новаторĕсен, малта пыракан коллективсен хисепĕ куллен ÿсет. Социализмла ăмăрту çĕнĕрен те çĕнĕ, обществăна малалла кайма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, хăватлă техникăпа лайăхрах усă курма пулăшакан пуçарусем суратать.

Мускаври «Красный пролетарий» заводри токарьсен патриотла пуçарăвĕпе çĕршывра производство циклне хăвăртлатассишĕн, Ново-Краматорскри И. В. Сталин юлташ ячĕпе тăракан заводри стахановецсен примерĕпе — машинăсен йывăрăшне чакарассишĕн, çав вăхăтрах становсен пахалăхне лайăхлатассишĕн ăмăрту сарăлса пырать. Средневолжски заводри Василий Колесов метала хăвăрт касса якатмалли меслете çĕнетсе пуянлатни пĕтĕм промышленноçри работниксене савăнтарать. Купавинори пустав тĕртекен фабрикăра ĕçлекен Жилина тата Харькова юлташсем чĕртавар нормăран ытлашши расходламасăр продукци нумайрах туса кăларассишĕн ăмăрту пуçарса ячĕç.

Çĕршыври Сталинла премин лауреачĕсен, производство новаторĕсен пахă меслечĕсемпе тата опычĕсемпе пирĕн республикăри промышленноçпа транспортра та анлăн усă кураççĕ. Улатăрти пăравуссем юсакан заводри И. Любаев, В. Семенов, А. Романов токарьсем, Н. Черенков фрезеровщик, В. Колесов пек ĕçлесе, ĕç нормине икĕ хут ытла ÿстерне. Халĕ вĕсем 1956 çул шучĕпе ĕçлеççĕ. Сталинла премин лауреачĕ В. Блаженов юлташăн опычĕпе усă курни республикăри пăравус машинисчĕсене йывăр тиенĕ поездсем илсе çÿреме, топливо перекетлеме май парать.

Республикăри предприятисенче, стройкăсенче тата чугун çул организацийĕсенче вуншар пин стахановец тата ударник ĕçлет. Производство новаторĕсен, стахановла ĕçлекен коллективсен хисепĕ пĕрмаях ÿсет. Вĕсем уйăхри тата çулталăкри заданисене срокчен пурнăçлаççĕ, ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ÿстерсе пыраççĕ, хăйсен опычĕпе ыттисене паллаштараççĕ. Электроаппаратура заводĕнчи Петров, Шарков, Мильман слесарьсене, Канашри вагонсем юсакан заводри Пекшин газосварщика, Папин электросварщика, Наваровпа Казаев машинистсене, Сысуйкинпа Вельдяев трактористсене, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи Одров столяра, Куславккари çуртсем тăвакан заводри Нигматуллин рационализатора, Николаева, Григорьева ткачихăсене тата ытти новаторсене те республикăри ĕççыннисем лайăх пĕлеççĕ. Пиншер рабочисем вĕсенчен пример илеççĕ, вĕренеççĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстереççĕ.

Атăл леш енчи торф кăларакан предприятири, Çĕмĕрлери «Большевик»» заводри, Канашри пăравус деповĕнчи партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсем малта пыракансемпе новаторсен лайăх тĕслĕхĕсене анлăн сарса пыраççĕ. Наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе, Сталинла премин лауреачĕсен паха опычĕсемпе усă курас тесе, Шупашкарти электроаппаратура завочĕ, Куславккари çуртсем тăвакан завод тата ытти хăшпĕр предприятисем Мускавпа Ленинградри тĕпчев институчĕсемпе, тĕрлĕ лабораторисемпе тачă çыхăну тытаççĕ.

Анчах нумай предприятисенче, стройкăсенче, чугун çул организацийĕсенче патриотлă пуçарусене сармаççĕ, социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçри формализма пĕтерме тăрăшмаççĕ. Республикăри чылай предприятисем иртнĕ çулхи тата кăçалхи пилĕк уйăхри производство планне тата ĕç тухăçлăхне ÿстермелли задание тултарманнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри çавă пулать те ĕнтĕ.

Кашни предприятире, стройкăра малта пыракан цехсем, сменăсем, бригадăсем, производство новаторĕсем пур. Çав вăхăтрах юлса пыракансем, ăмăртăва хутшăнман рабочисем те сахал мар. Патриотла пуçарусене, новаторсен опытне сарма, социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçри формализма пĕтерме тăрăшманнипе ĕнтĕ «Чăвашвăрман» трестĕнче ĕç тухăçлăхĕ ÿсес вырăнне чакса пырать. Канашри вагонсем юсакан заводра, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнче, вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнче стахановла юхăма аталантарма, рационализаторсемпе изобретательсен йышне ÿстерме кирлĕ пек тăрăшмаççĕ.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ĕççыннисен творчествăлла активлăхне ÿстермелли, социализмла ăмăртăва вăйлатмалли майсене кăтартса пачĕ. Промышленноçпа транспортри парти, хуçалăх, профсоюз, комсомол организацийĕсен социализмла ăмăртăва анлăн сарса пымалла, малта пыракансемпе новаторсен ĕçри лайăх тĕслĕхĕсене тата малалла кайма пулăшакан пуçарăвĕсене пĕтĕм вăйпа пулăшмалла, юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма пулăшас тесе, малта пыракан опыта рабочисем хушшинче çине тăрса сармалла.

Критикăпа самокритикăна анлăн сарса, предприятисенчи парторганизацисен социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçри формализма пĕтерсе пымалла, стахановла юхăма малалла аталантарма паха майсем туса памалла.

Промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен министерствăсемпе управленисен, профсоюз обкомĕсен, КПСС хула комитечĕсемпе Советсен вырăнти органĕсен малта пыракан предприятисен, стройкăсен, артельсен, производство новаторĕсен пахă опытне пĕтĕçтерсе анлăн сармалла, юлса пыракан предприятисене, рабочисене малта пыракансемпе танлашма пулăшмалла.

Патриотла пуçарусене, новаторсен меслечĕсене пропагандăласси, производствăри çитменлĕхсене хирĕç тимлĕн кĕрешесси, резервсене палăртасси — предприятисемпе стройкăсенчи стена хаçачĕсен, хуласемпе районсенчи хаçатсен тивĕçĕ.

Малта пыракан опыта ĕççыннисем хушшинче анлăн сарни социализмла ăмăртăва тата ытларах вăйлатма, коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшакан тĕп майсенчен пĕри пулать.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховнăй Советне пухасси çинчен

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăнать:
„Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессине 1953 çулхи июлĕн 14-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн
Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн
Секретарĕшĕн Д. МИТЬКОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи июнĕн 12-мĕшĕ.

Колхозсенче кайăк-кĕшĕк ĕрчетни

РСФСР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин инкубатор станцийĕсенче чĕпсен кăларма тытăннă. Россия Федерацийĕнчи колхозсем фермăсенче усрама пĕлтĕрхинчен 9 миллион чĕп ытларах туянĕ.

Чĕпсем ытларах кирлине шута илсе, кăçал çĕнĕрен 178 инкубатор станцийĕ туса ĕçе янă. Çак станцисем Саратов, Ростов, Сталинград тата ытти облаçсенче усăллă. Вĕсенчи нумайăшне «Рекорд-39» йышши хăватлă инкубаторсем панă. Кун пек кашни инкубатора пĕр вăхăтрах темиçе пин çăмарта хураççĕ.

Ставрополь крайĕнчи, Кабардин АССР-ĕнчи, Çурçĕр Осетин АССР-ĕнчи, Калининград тата ытти облаçсенчи инкубатор станцийĕсем чĕпсем кăлармалли çулталăкри плана срокчен тултарнă.

Сезон вĕçленнĕ тĕле инкубатор станцийĕсем иртнĕ çулхинчен 40 миллион чĕпĕ нумайрах кăларма палăртнă. Колхоз фермисене кăвакал, кăркка тата хур чĕпписем нумай усраççĕ. (ТАСС).

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Н. Г. Чернышевский çуралнăранпа 125 çул тултарнă тĕле

САРАТОВ, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян хулари тĕп лекторире «Чернышевскин «Мĕн тумалла?» романĕ тата унăн революциллĕ-воспитаниллĕ пĕлтерĕшĕ» çинчен лекци пулнă. Лекцие Н. Г. Чернышевский музей-çуртĕн научнăй сотрудникĕ М. И. Иванова вуласа панă.

Саратов облаçĕнчи хуласемпе ялсенче революциллĕ демократ, писатель тата философ Н. Г. Чернышевский çуралнăранпа 125 çул тултарнине паллă тума хатĕрленес ĕç сарăлса пырать. Предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче хăйсен чаплă землякĕ çинчен лекцисемпе литература каçĕсем организацилеççĕ. Н. Г. Чернышевский ячĕпе тăракан университетăн наукăлла библиотекинче, облаçри, хулари библиотекăсенче Н. Г. Чернышевский пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан выставкăсем хатĕрлеççĕ.

Н. Г. Чернышевскин «Мĕн тумалла?» ятлă романĕ тăрăх хатĕрленĕ «Çĕнĕ çынсем» ятлă спектакле куракансем питĕ тимлĕн пăхаççĕ.

Саратоври кĕнеке издательстви В. А. Смирнов-Ульяновский çырнă кĕнекене пичетлесе кăларнă. Ку кĕнекене Н. Г. Чернышевский çинчен çырнă «Аслă демократ» ятлă тата А. Н. Радищев çинчен çырнă «Тăван çĕршыв ывăлĕ» ятлă пьесăсем кĕнĕ.

Шахтерсен кунĕ ячĕпе

СТАЛИНО, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Сталино облаçĕнчи çĕр кăмрăк промышленноçĕнчи малта пыракан коллективсем Донбасри мĕнпур горняксене Шахтерсен кунне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн социализмла ăмăрту пуçарса яма чĕнсе каланă. Вĕсем çĕнĕ тата пысăкрах обязательствăсем йышăннă.

«Зуевантрацит» трестне кĕрекен шахтăсенчи горняксем çак çул пуçланнăранпа планран иртттерсе çĕршыва темиçе вуншар эшелон çĕр кăмрăкĕ кăларса панă. Шахтерсен кунĕ тĕлне малта пыракан трест коллективĕ тăтăшах цикл графикĕ тăрăх ĕçлеме йышăннă. Пĕтĕм çĕр кăмрăкĕнчен 62 процентне кунта комбайнсемпе кăлараççĕ. Çак майпа ĕçлесе Зуевкăри горняксем Шахтерсен кунĕ тĕлне заданирен иртттерсе тата вуншар пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларма, çĕр кăмрăкĕ кăлармалли ĕçĕн хăйне ларакан хакне йÿнетнипе пĕр миллион тĕнкĕрен кая мар укçа перекетлеме пулнă.

Ытти трестсемпе предприятисенче ĕçлекенсен коллективĕсем те çĕнĕ обязательствăсем йышăннă.

Ĕнер Украинăри компартин Сталино обком бюровĕ горняксен патриотла пуçарăвне ырланă.

Ростов облаçĕ. Совхозсенче ĕçе механизацилес тата электрификацилес тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институчĕ утă пуçтарса кĕртме çĕрте пысăк тухăçлăхпа ĕçлемелли машинăсен комплексне туса хатĕрленĕ. Çав машинăсемпе 8—10 сехет хушшинче 40—50 гектар çинчен утă пуçтарса тирпейлеме пулать. Çĕнĕ машинăсемпе ĕçленĕ чухне, ытти машинăсемпе ĕçленипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхĕ 8—10 хут ÿсет. Облаçри колхозсемпе совхозсенче кăçал çĕнĕ машинăсемпе анлăн усă кураççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сăнавсем туса вĕренмелли 2-мĕш совхозра. Тракторпа ĕçлесе капан хывакан механизмпа пысăк урапа çине утă тиеççĕ.

Л. ПОРТЕР фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Педагогсем хатĕрлес ĕç

РСФСР Çутĕç министерствин коллегийĕ Мускаври иккĕмĕш педагогика училищи политехникăлла вĕренÿ пуçламăшне пурнăçлас тĕлĕшпе тунă опыта сÿтсе явнă. Кунта программăри материалсене вĕреннĕ чухне производство ĕçĕсемпе паллашаççĕ. Физика, хими, математика предмечĕсене вĕреннĕ чухне вĕренекенсем политехника музейне, предприятисене экскурсие каяççĕ, кинофильмсем пăхаççĕ.

Ятарласа хатĕрленĕ мастерскойсенче пулас педагогсем токарь, столяр, слесарь, электротехник ĕçне вĕренеççĕ. Вĕсем хăйсем тĕллĕн нагляднăй пособисем хатĕрлеме, выставкăсем йĕркелеме, механизмсен моделĕсене тума вĕренеççĕ.

Училище çумĕнче пысăках мар теплица тата опытлă участок пур. Кунта панулми, чей-çырли, хăмла çырли, хурлăхан йывăççисемпе пĕрлех, виноград, гранат йывăççĕ, ăшша юратакан кактус, тропикăра çитĕнекен ÿсентăрансем, кăнтăрти чечексем çитĕнеççĕ. Биологи занятисене мичуринла вĕрентĕвĕн теорилле никĕсĕсене социализмла ялхуçалăхĕн практикипе çыхăнтарас енĕпе туса пыраççĕ. Пулас учительсем Мускаври Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕнче, Мускав çывăхĕнчи колхозсемпе совхозсенче час-часах пулаççĕ.

РСФСР Çутĕç министерствин коллегийĕ асăннă педагогика училищин опытне ырланă, çак опыта Россия Федерацийĕнчи педагогика училищисене сарма йышăннă. (ТАСС).

В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул çитнĕ тĕле

Июнĕн 10-мĕшĕнче Мускавра литература музейĕнче В. В. Маяковские асăнса литература каçĕ пулса иртнĕ.

Столицăри предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен çамрăк рабочисемпе служащисем, строительсем, вĕренекенсем музейри материалсемпе паллашнă. Çав материалсем поэт творчествин тĕп тапхăрĕсене палăртса тăраççĕ. В. В. Маяковский çинчен аса илсе Л. В. Маяковская сăмах тухса каланă. Илемлĕ сăмах ăстисем Маяковский çырнă произведенисен уйрăм сыпăкĕсене вуласа панă.

Ку вăл совет саманинчи талантлă поэт çуралнăранпа июлĕн 19-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа Мускавра иртттерекен каçсенчен пĕри пулнă. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МТС-сенче КОМБАЙНСЕМПЕ, ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТМЕЛЛИ ЫТТИ МАШИНАСЕНЕ ЮСАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

1953 çулхи июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Юсанă: Комбайнсем	Молотилкăсем	Жаткăсем	Тырă тасатмалли машинăсем
Улатăр	62	27	15	33
Элĕк	22	50	55	100
Вăрнар	26	—	—	—
Йĕпреç	100	25	53	100
Ишлей	20	8	—	50
Калинино	—	14	38	50
Канаш	5	—	—	—
Куславкка	21	7	4	100
Комсомольски	20	17	—	—
Красноармейски	—	14	—	—
Хĕрлĕ Чутай	43	29	13	—
Кувакино	10	9	—	—
Сĕнтĕрвăрри	33	—	—	—
Муркаш	50	—	—	—
Октябрьски	20	—	—	—
Первомайски	58	—	76	50
Пăрачкав	70	27	40	—
Сиява	20	11	—	—
Советски	100	—	—	—
Сĕнтĕр	31	23	24	—
Сурмайдан	6	—	—	—
Вăрмар	6	—	18	—
Çĕрпÿ	39	—	20	67
Шупашкар	40	—	20	—
Чкаловски	50	—	13	50
Чурачăк	40	29	—	—
Шăмăршă	32	7	—	100
Шăхасан	6	13	—	—
Çĕмĕрле	27	7	—	—
Етĕрне	33	—	—	—
Елчĕк	40	—	18	—
Тăвай	19	19	—	100

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧИ ÇĔРТМЕ СУХИ ТĂВАС ТАТА УЯ ТИСЛĔК КĂЛАРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

1953 çулхи июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Çĕртме сухи тунă	Тислĕк кăларнă
Кувакино	100	15
Ишлей	100	37
Шупашкар	100	52
Чурачăк	100	63
Октябрьски	100	43
Тăвай	98	42
Пăрачкав	98	27
Элĕк	97	49
Комсомольски	96	68
Елчĕк	96	74
Чкаловски	94	62
Хĕрлĕ Чутай	92	24
Советски	92	64
Шăмăршă	92	25
Красноармейски	91	83
Куславкка	91	25
Сĕнтĕр	90	80
Канаш	89	57
Муркаш	88	81
Çĕрпÿ	88	74
Вăрмар	87	46
Калинино	85	55
Шăхасан	81	90
Йĕпреç	80	43
Сĕнтĕрвăрри	78	84
Вăрнар	76	85
Первомайски	75	41
Улатăр	74	20
Етĕрне	66	41
Çĕмĕрле	61	29

Комбайнсене лайăх юсамалла

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ социализмла ялхуçалăхĕ умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çак задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе машина-трактор станцийĕсем пысăк ĕçсем туса пымалла. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче МТС-сен ĕçĕсене лайăхлатса, колхозсенчи йывăр ĕçсене механизацилеме, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес енĕпе МТС-сен ответлăхне пысăклатма кăтартса панă.

МТС-сенчи машинăсемпе тракторсене, çавăн пекех колхозсенчи машинăсене тырпул пухса кĕртме вăхăтра тата лайăх юсаса хатĕрлени çÿлте асăннă задачăсене пурнăçа кĕртме кирлĕ.

Халĕ республикăри колхозсемпе МТС-сенче тырă вырса пухма хатĕрленеççĕ. Малта пыракан МТС-сен опычĕ кăтартнă тăрăх комбайнсене тата тырпул пухса кĕртмелли ытти машинăсене пысăк пахалăхпа юсани, вĕсене техника правилисем тăрăх вăхăтра юсаса тăни машинăсемпе тухăçлă ĕçлеме, тырпула кĕске вăхăтра пухса кĕртме май парать. Çавăнпа та комбайнсемпе ытти машинăсене вăхăтра тата лайăх юсаса хатĕрлемелле.

Анчах та республикăри чылай МТС-семпе колхозсенче тырпул пухса кĕртмелли машинăсене юсаса хатĕрлес ĕçе япăх туса пыраççĕ. Чкаловски, Шăмăршă, Вăрнар МТС-сенче тĕрĕсленĕ чухне комбайнсене юсас ĕçе кирлĕ пек организацилемени палăрчĕ. Ку ĕçе пур комбайнерсене те явăçтарман. Шăмăршă МТС-ĕнче 24 комбайнертан юсас ĕçе 5 çын кăна хутшăнаççĕ, ыттисем килте пурăнаççĕ. МТС руководителĕсем комбайнерсене пурне те ĕçе хутшăнтарассишĕн тăрăшмаççĕ. Çав вăхăтрах кунта виçĕ комбайн кăна юсама тытăннă.

МТС-сенче юсав технологине пăсаççĕ. Юсанă текен комбайнсен пысăк çитменлĕхсем пур. Кун пек фактсем Чкаловски, Шăмăршă, Вăрнар МТС-сенче курма пулать. Комисси юрăхлă тесе йышăннă комбайнсенчен пĕри те юрăхли çук. Юсанă хăшпĕр комбайнсен 20 ытла уйрăм çитменлĕхсем тупăнаççĕ.

Шăмăршă МТС-ĕнче 1-мĕш номерлĕ «С-6» комбайна ытла та япăх юсаса кăларнă пулсан та, ăна лайăх юсанă тесе йышăннă. Ку вăл кабинетра ларса, тĕрĕслемесĕр йышăннине пĕлтерет. 9-мĕш номерлĕ «С-4» комбайнăн звездочкисем нумайăшĕ юрăхсăр, звездочкăсене вал çумне хытармасăрах лартса хăварнă. Чкаловски МТС-ĕнчи «юсанă» комбайнсенчен чылайăшне юсас тесе алăпа тĕкĕнмен те, вĕсен ăшĕнче пĕлтĕрхи улăм, çĕрнĕ арпа, çÿп-çап тулли ех.

Шăмăршăпа Чкаловски МТС-сенче юсанă комбайнсен двигательне обкатка тумасăр, молотилкине, хедерне, улăм пуçтарса купалаканнине ĕçлеттерсе пăхмасăр йышăнаççĕ.

Мĕншĕн-ха кунта çавăн пек начар ĕçлесе брак тăваççĕ? МТС руководителĕсем машинăсене юсас ĕçе узловой меслетпе тата типовăй технологипе организацилемеççĕ. Машинăсене юсанă чухне контроль пулман пирки, юсав ĕçĕсем хăй тĕллĕн кăна пулса пыраççĕ.

Шăмăршăпа Чкаловски МТС-сен директорĕсем машинăсене узловой меслетпе юсассине кирлĕ ĕç вырăнне хумаççĕ. Вĕсем комбайнсене юсама пĕр узел та организацилемен. Кунта кашни комбайнер хăйĕн комбайнне малтан пуçласа вĕçне çитиччен юсать. Кун пек кивĕ меслете тахçанах сивленĕ. Юсакансене кашни кун мĕн тумаллине кăтартса памаççĕ. Вĕсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕç те тата социализмла ăмăрту та йĕркелемен. Паллах ĕнтĕ, кун пек çĕрте кирлĕ пек ĕçлессине кĕтмелли çук.

Çитменнине Чкаловскипе Шăмăршă МТС руководителĕсем механизаторсен квалификацине ÿстерессишĕн пĕртте тăрăшмаççĕ. Машинăсене юсакансемпе техникăлла занятисем иртттермеççĕ.

Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата районсенчи ертсе пыракан органсем МТС-сенче тырпул пухса кĕртмелли машинăсене мĕнле юсанине тĕрĕслемеççĕ, пулăшу памаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Чкаловскипе Шăмăршă МТС-сем тырпул пухса кĕртмелли машинăсене юсас ĕçре ытла та кая юлнă.

Чкаловски МТС директорĕ Степанов тата главнăй инженер Северов юлташсем, комбайнсене мĕнле юсанине куллен тĕрĕслесе тăрас вырăнне, улталас çул çине тăнă. Степанов юлташ юсаса пĕтермен çичĕ комбайна хатĕр тесе июнĕн 1-мĕшĕнчех сводкăна кĕртнĕ, çав комбайнсем паян кун та хатĕр мар-ха. Степановпа Северов юлташсем, машинăсене юсанине тĕрĕслес ĕçрен пăрăнса, ку ĕçе ялхуçалăх машинисене сахал пĕлекен Васильев механикпа Каллин контролер-механика шанса панă, вĕсем те комбайнерсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслемеççĕ.

МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Минин юлташ машинăсене юсакансем патĕнче сайра хутра çеç пулать, политикăлла-массăлла ĕçе, социализмла ăмăрту организацилеме тăрăшмасть.

Туман ĕçех тунă тесе отчетра çырни Шăмăршă МТС-ĕнче те пулнă.

Машинăсене юсас ĕçе халех вăйлатмалла. Юсав ĕçне узловой меслетпе организацилемелле. Çак ыйту çине МТС руководителĕсем, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсем те тимлĕн пăхни кирлĕ. Комбайнсене юсамалли вырăна лайăх хатĕрлемелле, материалсем, запаслă пайсем, инструментсем çителĕклĕ тупса памалла. Кашни кулленхи заданисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси МТС руководителĕсен çак тапхăрти чи кирлĕ ĕçĕ пулмалла.

Кунпа пĕрлех мĕнле юсанине те лайăх тĕрĕслесе тămалла. Юсанă хыççăн тĕплĕ пăхса тухмасăр, пур агрегатсем те мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пăхмасăр пĕр комбайна та йышăнмалла мар.

Комбайнсемпе ытти машинăсене юсасси кая юлса пынине халех пĕтересси, ялхуçалăх машинисене тырпул пухса кĕртме вăхăтра юсаса хатĕрлесси МТС руководителĕсен хальхи вăхăтри пысăк задачи пулать.

Çак асăннă задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес ĕçе партипе советсен вырăнти органĕсен ертсе пымалла. Вĕсен пур механизаторсене те машинăсене лайăх тата срокчен юсаса çитерме социализмла ăмăртăва хутшăнтармалла. Начар ĕçлесе брак тунине сиенĕнчех пĕтермелле. Юсав ĕçĕнчи рабочисемпе механизаторсене пурне те машинăсене лайăх юсассишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнтармалла.

И. АВДЯКОВ,
СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин Главцентрĕн МТС управленийĕн старши инженерĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти райкомĕн пленумĕ комсомол организацийĕсен ĕçĕсем çинчен

ПЕРВОМАЙСКИ. КПСС райкомĕн черетлĕ пленумĕ комсомол организацийне ертсе пырассине лайăхлатасси çинчен сÿтсе явrĕ.

КПСС райкомĕ тата пуçламăш парторганизацисем комсомола ертсе пырас ĕçе чылай лайăхлатнă. «Красная поляна» колхозри парторганизаци секретарĕ Н. Кошкин, колхоз председателĕ, КПСС райкомĕн членĕ П. Степанов комсомол пухăвĕсенче час-часах пулаççĕ, комсомол организацине кăтартусем параççĕ. Парторганизаци хăйĕн усă пухăвĕсене комсомолецсене чĕнмесĕр хăвармасть, чылай комсомолецсене обществăлла-политикăлла ĕçе явăçтарать. Çавăнпа та колхозри комсомол организацийĕ юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçри пултарулăхне вăйлатрĕ. Колхозра 23 комсомолец. Вĕсем пурте колхоз производствинче хастарлă ĕçлеççĕ, политикăлла-массăлла ĕçе хутшăнаççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен политикăлла вĕренĕвне те лайăх йĕркеленĕ. Кашни комсомолец хаçат çырăнса илет. Çавăн пекех юлашки вăхăтра «Большевик», «Алга», «Пионер» колхозсенчи парторганизацисем те комсомол организацисене ертсе пырас ĕçе лайăхлатрĕç.

Пленум çакăнпа пĕрлех пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. Чылай парторганизацисем комсомол организацийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ, вĕсен ĕçĕпе интересленмеççĕ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Путь коммунизма» колхозра 41 комсомолец, анчах та комсомол комитечĕ япăх ĕçлет. Комсомол пухăвĕсене 1952 çулта тăватă хут çеç ирттернĕ, 1953 çулта пĕрре те иртторман. Комсомолецсенчен чылайăшĕ член укçине вăхăтра тÿлемеççĕ, колхоз производствинче ытти çамрăксемпĕн кăтартуллă ĕçлемеççĕ. Пуçламăш парторганизаци комсомол организацине ертсе пымасть: пĕлтĕр тата кăçал парти пухăвĕсенче комсомол ĕçĕ çинчен пĕрре те сÿтсе явман.

Çавăн пекех «Новая сила», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисем те комсомол организацийĕсен ĕçĕпе нимĕн чухлĕ те интересленмеççĕ, комсомолецсен ĕçри авангардлă рольне хăпартма тăрăшмаççĕ. Çавăнпа комсомол организацийĕсен шалти ĕçĕ вăйсăрланнă: комсомол пухăвĕсене хатĕрленмесĕр ирттереççĕ, вĕсенче самокритикăпа критика вăйсăр, малта пыракан çамрăксене комсомол ретне çителĕксĕр хутшăнтараççĕ. Комсомола уйрăмах хĕрачасене сахал илеççĕ.

Районта комсомолецсемпе çамрăксен политикăлла вĕренĕвне начар йĕркеленĕ. Кăçал 153 комсомолеца политикăлла вĕренĕве явăçтармасăр хăварнă. Хрущев ячĕпе тăракан, «Сталинград» колхозсенчи, Смычка поселокĕнчи кружоксенче кăçал занятисем иртермеnпе пĕрех. Пуçламăш парторганизацисем çак çитменлĕхсемпе килĕшсе пынă. Шкулсенчи комсомол организацийĕсем шкулти вĕренÿ ĕçне, пионер организацийĕн ĕçне тивĕçлĕ пек ертсе пымаççĕ.

Пленум КПСС райкомĕн бюровĕ, унăн парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕ комсомол организацийĕсен ĕçĕпе сахал интересленнине кăтартса хăварчĕ. Иртнĕ çулта районти 48 пуçламăш парторганизацирен комсомол ĕçĕсем çинчен 8 парторганизаци çеç сÿтсе явнă. Райком бюровĕ ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене вăхăтра тÿрлетме тăрăшман, райкома практикăллă пулăшу сахал панă.

ВЛКСМ райкомĕ комсомол организацийĕсене тĕреклетессишĕн, вĕсен кĕрешÿри пултарулăхне ÿстерессишĕн кирлĕ пек тăрăшмасть. ВЛКСМ райкомĕнче ĕçлекенсем вырăнсенче пулнă чухне пуçламăш парторганизацисен секретарĕсемпе çыхăнмаççĕ, комсомол организацийĕсем япăх ĕçленипе килĕшсе лараççĕ. ВЛКСМ обкомĕ те сахал пулăшать. ВЛКСМ обкомĕн членĕн кандидачĕ М. Иванова юлташ Хрущев ячĕпе тăракан колхозри политкружок ĕçне япăхтарса янă.

Пленум КПСС райкомне тата пуçламăш парторганизацисене комсомола ертсе пырассине вăйлатма хушса тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

А. ТУКМАКОВ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра çырнă хыççăн

«ПАРТИ ВĔРЕНĔВĔН ÇУЛНЕ АНĂÇЛĂН ВĔÇЛЕР»

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра апрелĕн 25-мĕшĕнче «Парти вĕренĕвĕн çулне ăнăçлăн вĕçлер» ятлă статья тухнăччĕ.

КПСС Хĕрлĕ Чутай райкомĕ статьяра çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани, унта асăннă çитменлĕхсене пĕтересси çинчен КПСС райком бюровĕн ларăвĕнче сÿтсе явни çинчен пĕлтерчĕ. КПСС райкомĕ парти вĕренĕвĕн çулне ăнăçлă вĕçлес тата çĕнĕ вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленес шутпа решени йышăннă.

«РЕВИЗИ КОМИССИЙĔСЕН ĔÇĔНЧИ ХĂШПĔР ÇИТМЕНЛĔХСЕМ ПИРКИ»

Майăн 10-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленнĕ «Ревизи комиссийĕсен ĕçĕнчи хăшпĕр çитменлĕхсем пирки» ятлă статьяра хăшпĕр колхозсенчи ревизи комиссисем, уйрăмах Калинино районĕнчи колхозсенчи ревизи комиссийĕсем çителĕксĕр ĕçленине кăтартса панăччĕ.

КПСС Калинино райкомĕ асăннă статьяна райкомăн бюро ларăвĕнче сÿтсе явни, колхозсенче учетпа отчет тата ревизи комиссийĕсен ĕçĕсене лайăхлатас ыйтупа колхоз председателĕсемпе тата колхоз счетовочĕсемпе ятарласа семинарсем иртерни çинчен пĕлтерчĕ.

«ЯЛ СОВЕЧĔ ВУЛАВ ÇУРТНЕ ПУЛĂШМАСТЬ»

Майăн 13-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Ял Совечĕ вулав çуртне пулăшмасть» ятлă çыру пичетленсе тухрĕ. Ĕççынни депутачĕсен Хĕрлĕ Чутай район Совечĕн исполкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, çырăва Ишеккасси ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă, вулав çуртĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăваш АССР государство издательстви юлашки вăхăтра çакăн пек кĕнекесем кăларнă:

В. И. Ленин. Инçетрен янă çырусем. Тираж 5.000 экз., 56 стр., хакĕ 55 пус.

В. И. Ленин. Совет влаçĕн черетри задачисем. Тираж 5.000 экз., 106 стр., хакĕ 1 т. 25 пус.

В. И. Ленин. Ялти чухăнсене. Тираж 5.000 экз., 84 стр., хакĕ 75 пус.

В. И. Ленин. Социал-демократин демократиллĕ революцири икĕ тактики. Тираж 5.000 экз., 136 стр., хакĕ 2 тенкĕ.

И. Сталин. «Социал-демократа» панă ответ. Тираж 5.000 экз., 16 стр., хакĕ 20 пус.

Эм. Казакевич. Одер çинчи çуркунне. Вырăсларан Г. Молостовкин куçарнă. Тираж 5.000 экз., 485 стр., хакĕ 7 т. 50 пус.

А. Макаренко. Ашшĕ-амăшĕсем валли çырнă кĕнеке. Вырăсларан Г. Байдеряков куçарнă. Тираж 2.000 экз., 324 стр., хакĕ 5 т. 60 пус.

Авалхи тĕнче историйĕ. Вăтам шкулăн 5—6-мĕш класĕсем валли А. В. Мишулин профессор редакциленĕ. 5-мĕш издани. Тираж 25.000 экз., 248 стр., хакĕ 3 т. 50 пус.

Александр Артемьев. Юрату юррисем. Тираж 5.000 экз., 236 стр., хакĕ 4 т. 70 пус.

Стихван Шавлы. Маттур Якур. Тираж 3.000 экз., 96 стр., хакĕ 2 т. 30 пус.

Георгий Ефимов. Ăшă кăмăл. Тираж 2.000 экз., 80 стр., хакĕ 2 т. 35 пус.

И. Т. Трофимов. Букварь. Çитĕннисем валли. Тираж 3.000 экз., 88 стр., хакĕ 1 т. 15 пус.

С. Г. Григорьев. Пысăк тухăçлă кĕрхи тулă акса тăвасси. (Шупашкар районĕнчи «1-ое Мая» колхоз çумĕнчи сортсене сăнакан участок опытĕнчен). Тираж 3.000 экз., 20 стр., хакĕ 25 пус.

Совет аппаратĕнче тимлĕхе ÿстерсе пырар

Партин XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла кăтартса пачĕ: «Эпир хамăр государствăна, хамăр çара, хамăрăн карательнăй органсемпе разведка органĕсене тĕреклетмен пулсан, эпир тăшмансем умĕнче тата вăрçăпа çĕмĕрсе тăкас хăрушлăх умĕнче хĕçпăшалсăр тăрса юлнă пулăттăмăр. Парти Совет çĕршывне социализмăн никам çĕнтерейми тĕрекĕ туса хучĕ, мĕншĕн тесен вăл социализмла государствăна пур майсемпе те çирĕплетсе пычĕ тата малалла та çирĕплетсе пырать».

Совет законĕсене çирĕппĕн пурнăçласа пыни вăл Совет государствипе Советлă обществăлла строя çирĕплетсе пымалли тĕп условисенчен пĕри пулса тăрать. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ Совет государствине яланах тĕреклетсе пырать, çак задачăна чи кирлĕ задачăсенчен пĕри тесе шутлать.

Капитализмла йĕритавралăх çинчен, империалистсем Совет Союзне хирĕç усал ĕçсем туни çинчен совет çыннисен нихçан та манмалла мар. Кунсăр пуçне пирĕн çĕршыври хăшпĕр çынсен ăс-тăнĕнче буржуалла идеологин юлашкисем халĕ те пĕтмен-ха, чылай çынсен ăс-тăнĕнче уйрăм харпăрлăхăн психологийĕ сыхланса юлнă, хăшпĕр чухне тата халăх тăшманĕсем, вăрттăн ĕçлекенсем, буржуалла идеологие сарма тăрăшаççĕ. Тăшмансен сиенлĕ ĕçĕсене асăрхас, вĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе кашни совет çынниннех пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Совет çыннисен хăйсен политикăлла сисĕмлĕхне ÿстерсех пымалла, ĕçри тимсĕрлĕхе, чунсăрлăха пĕтермелле.

Хăшпĕр учрежденисенче, предприятисемпе организацисенче тимсĕр, çăмăлттай çынсем халĕ те пур-ха. Ирсĕр ĕç тăвакан çынсем: авантюристсем, жуликсем тата ыттисем те хăшпĕр çынсен тимсĕрлĕхĕпе усă кураççĕ, совет аппаратне, суту-илÿ организацийĕсене вырнаçаççĕ.

Ĕçри тимсĕрлĕх питĕ сиенлĕ. Анчах хăшпĕр работниксем хăйсен тимсĕрлĕхĕ мĕн патне илсе çитересси çинчен кирлĕ пек шухăшласа та пăхмаççĕ. Çакă вара уйрăммăнах хăрушă пулса тăрать.

Улатăр хулинчи больницăна пĕр çын пынă пулнă. Вăл хăйне Сетянов хушаматлă тесе пĕлтернĕ. Çак çын кам иккенне никам та кирлĕ пек тĕрĕслеме тăрăшман, ĕçе илнĕ чухне унăн документĕсене те тĕрĕслемен. Больница хушма хуçалăхĕн директорĕн тимсĕрлĕхне пула çак Сетянов текен жулик кассăран 12 пин тенкĕ укçа илнĕ те тухса тарнă. Сетянов жулике тепĕр облаçра кăна тытма май килнĕ, вăл халиччен судпа айăпланнă çын пулнă. Улатăр больницинчи хушма хуçалăх директорĕ Шканов çакна тĕрĕслемен.

Шупашкарти аш-какай комбинат ларекĕн заведующийĕ пулма пĕр Пугачев хушаматлă çынна лартнă. Ĕçе кĕнĕ чухне вăл комбинат дирекцине нимĕнле документсем те тăратман. Çав çын вара виçĕ уйăх ĕçленĕ те 15 пин тенкĕ укçа чиксе тарнă. Кайран ăна Куйбышев хулинче тытнă. Вара çакă паллă пулнă: унăн хушамачĕ Пугачев мар, Пугач пулнă иккен, çак çын вăрланăшăн темиçе хутчен те суда лекнĕ.

Калинино районĕнчи больницăн главнăй врачĕ пулма ку тĕлĕшпе нимĕнле пĕлÿлĕх те илмен, нихçан та врач пулса ĕçлемен çынна йышăннă. Çав çыннăн суя документсем кăна пулнă. Кăштах вăхăт иртсен, çак Зайцева тухса тарнă. Ăна кайран Краснодар крайĕнче тытнă. Çак аферистăн пилĕк тĕрлĕ хушамат пулнă. Суя документсемпе усă курса, вăл тĕрлĕ хуласенче ĕçе кĕнĕ. Медицина пĕлÿлĕхĕ пулман пирки вăл çынсене тĕрĕс мар сыватса пăснă, юлашкинчен вара, ответ тытасран хăраса тарнă.

Пирĕн хăшпĕр работниксем социализмла харпăрлăха сыхлас ĕçре ответлăха туймаççĕ, тимлĕхе çухатаççĕ. Çавна пула государствăн пурлăхне сыхласа усрас ĕçе çапкаланчăк çынсем, жуликсем, вăрăсем лекеççĕ, вĕсем вара пирĕн государствăна пысăк сиен кÿреççĕ. Тимсĕрлĕх, çапла вара, тĕрлĕ сиенлĕ ĕçсем тума май парать. Государство харпăрлăхне çаратни, государствăна пысăк сиен кÿни, ялан тенĕ пекех, тимсĕрлĕх, ответсăрлăх пирки пулнă.

Чкаловски районĕнче райпотребсоюз заготовителĕ пулма пĕр Тазетдинов хушаматлă çынна илнĕ. Вăл мĕнле çын иккенне никам та тĕрĕслемен. Вăл кунта 6 пин тенкĕ растрата тунă та тухса тарнă. Вара вăл Елчĕк районне кайнă, унта каллех райпотребсоюз заготовителĕ пулса ĕçлĕме тытăннă. Елчĕк райпотребсоюз работникĕсем те вăл мĕнле çын иккенне кирлĕ пек тĕрĕслесе пăхман, ăна шанса нумай укçа панă. Тазетдинов тĕрлĕ таварсем хатĕрлеме тесе 9 пин тенкĕ илнĕ те тухса тарнă.

Канашторгăн 3-мĕш номерлĕ магазинĕн заведующийĕ пулса Гимаев текенскер ĕçленĕ, унăн нимĕнле документ та пулман. Вăл кам пулни çинчен, ăçтан килни çинчен никам та пĕлме тăрăшман. Çак çын 26 пин тенкĕ растрата тунă. Тĕрĕслесе пăхсан, çакă палăрнă: Гимаев халиччен те государство укçи-тенкине салатнă, кăсйине чикнĕ, уншăн ăна суда панă, вăл суд умне тăрасран хăраса пытанса пурăннă иккен. Анчах та Канашторгăн работникĕсем жулике пытанма пулăшнă. Çапла вара вăл уйрăм работниксен тимсĕрлĕхне пула государствăна пысăк сиен кÿме пултарнă. Жулике суд тунă, Канашторгри тимсĕр работниксене те тивĕçлипех ответ тыттарнă.

Хăшпĕр вырăнсенче уйрăм работниксен тимсĕрлĕхне, ответсăрлăхне пула, вăрăсемпе жуликсен сиенлĕ ĕçне каярахпа кăна тăрă шыв çине кăлараççĕ. Çапла вара вăрăсемпе жуликсем ку вăхăтчен хăйсен сиенлĕ ĕçне тума ĕлкĕреççĕ, государствăн укçи-тенкине пĕтереççĕ, çав укçа-тенкĕне тепĕр чухне шыраса илме те май килмест. Çакăн пек фактсем юлашки вăхăтра Элĕк, Елчĕк районĕсенче пулнă. Çак вăрăсен, жуликсен ĕçне райпотребсоюз руководителĕсем нумай вăхăт хушши сисмен, вĕсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларман.

РСФСР вăрман промышленность министерствин Чăваш АССР-ĕнчи суту-илÿ организацийĕсенче те тимлĕхе çухатни çинчен кăтартса паракан фактсем пур.

Хамăр хушăри тимсĕрлĕхе, ответсăрлăха пĕтерессишĕн кашни ĕççыннин пĕтĕм вăя хумалла. Пирĕн предприятисен, учрежденисен, организацисен руководителĕсен, пĕтĕм совет çыннисен политикăлла сыхăлăхне, совет çыннисен идейăлла-политикăлла шайне ÿстермелле.

И. СИДОРКИН,
Чăваш АССР прокурорĕ.

Вăрманпромхоз мĕншĕн юлса пырать

ВĂРНАР. «Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан вăрманпромхозăн куçса çÿрекен электростанцисем, электропăчкăсем, тракторсем, автомашинăсем тата ытти механизмсем чылай, ялан ĕçлекен рабочисем те çителĕклĕ. Ĕçе тĕрĕс йĕркелесен вăрманпромхоз кварталти задание ăнăçлă пурнăçлама пултарать. Икĕ уйăхра вăрманпромхоз иккĕмĕш кварталти плана 20 процент кăна тултарнă. Унăн планĕ те пысăках мар.

Вăрманпромхоз мĕншĕн юлса пырать-ха?

Унăн ĕçĕпе тĕплĕн паллашнă хыççăн, çакă курăнать: кунта производствăна начар организациленĕ, дисциплина япăх, механизмсемпе тата ытти вăйсемпе туллин усă курмаççĕ, панă заданисене тултарса пымаççĕ.

Хăшпĕр трактористсем ĕçе лайăх хатĕрленмесĕр тата кая юлса тухаççĕ. Рабочком тата мастерсем Сысуйкин юлташăн пăха меслетне сарма тăрăшмаççĕ. Трактористсем тухăçлă ĕçлесси йывăççене тĕрĕс касса йăвантарнинчен те сахал мар килет. Кунта йывăççене мĕнле май килнĕ çавăн пек касса пăрахаççĕ. Урлă-пирлĕ выртнă пирки вĕсене тракторсем çине тиенĕ чухне нумай вăхăт иртет. Асăннă çитменлĕхсем пирки трактористсем ĕç нормине çурри ехăн кăна тултарса пыраççĕ.

Вăрман касса хатĕрленĕ çĕрте куçса çÿрекен электростанцисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Кашни электростанци виçтăват электропăчкăна ĕçлеттерет. Вăрманпромхозра çичĕ электростанци пур. Çапла вара вĕсем 21—28 электропăчкăна ĕçлеттерме пултараççĕ. Кунта çакăн чухлĕ электропăчкă ĕçлемест. Иккĕмĕш кварталта 30 пин кубометр йывăç касса хатĕрлемелле пулсан, икĕ уйăхра 4.000 кубометр кăна касса хатĕрленĕ. Урăхла каласан, электропăчкăсен хăвачĕпе 20—30 процент кăна усă кураççĕ.

Вăрманпромхозра опытлă инженерсемпе техниксем сахал мар. Анчах та вĕсенчен чылайăшĕ ĕçе тĕрĕс йĕркелеме, малта пыракансен опытне сарма, механизмсене татти-сыпписĕр ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ. Главнăй инженер Шур юлташ хăшпĕр работниксем начар ĕçлени çинчен калаçма юратать. Анчах вăл вĕсене пулăшу сахал парать, работниксен пуçарулăхĕпе ответлăхне ÿстерме тăрăшмасть.

Механизмсемпе халĕ хĕллехинчен те япăхрах усă кураççĕ. Дирекци вăрман пункчĕсем мĕнле ĕçленине куллен тĕрĕслесе тăмасть, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме, кашни механизатор валли паха майсем туса пама тăрăшмасть.

Ăштăр тата Машавăш вăрман пункчĕсен начальникĕсем Топриковпа Орешников юлташсем рабочисен техникăлла пĕлĕвне ÿстерме курссем, кружоксем организацилемеççĕ, малта пыракан коллективсен, производство новаторĕсен опычĕпе меслетне сармаççĕ, юлса пыракансене пулăшмаççĕ. Вĕсем хăйсем те техникăна тĕплĕн пĕлмеççĕ, çавăн пирки хăшпĕр ыйтусене çийĕнчех тĕрĕс татса параймаççĕ.

Вăрман турттармалли механизмсемпе туллин усă курма çулсене юсавлă тытмалла. Вăрманпромхозăн пилĕк километр тăршшĕ çĕнĕ çул тумалла, кивĕ çулсене юсамалла, кирек мĕнле çанталăкра та пĕр чарăнмасăр йывăç турттарма кирлĕ условисем тумалла. Хальхи вăхăтра çĕнĕ çул тăвасси питĕ япăх пырать, киввисене юсама тытăнманпа пĕрех.

Вăрманпромхоз директорĕ Павлов юлташ каланă тăрăх, вăрманпромхоз кĕркуннепе хĕллехи сезонти плана çул начар пулнă пирки тултарайман. Апла пулсан, çулсене çуллахи вăхăтра ытларах юсаттарма тăрăшмалла.

Юлашки вăхăтра рабочком культурăлла-массăлла ĕçе вăйсăрлатнă, производствăлла канашлусем, пухусем сайра-хутра çеç иртерет, социализмла ăмăртăва сарма тăрăшмасть. Ăмăрту итогĕсене, йышăннă обязательствăсене кам мĕнле пурнăçласа пынине вăхăтра пăхса тухмаççĕ, çамрăк рабочисене техникăна алла илме пулăшмаççĕ. Чылай мастерсем тата ытти хăшпĕр работниксем хăйсен хуçалăхĕшĕн ытларах тăрăшаççĕ. Пĕрисем пахча çимĕç лартса, теприсем—çум çумласа, выльăх пăхса, ыттисем çаран çулма хатĕрленсе вăхăта сая яраççĕ, хăйсен государство умĕнчи тивĕçне манаççĕ. Дирекципе парторганизаци çавăн пек киревсĕр йăлапа килĕшсе тăраççĕ, ертсе пыракан работниксен ответлăхне ÿстерме тăрăшмаççĕ.

П. ИВАНОВ.

Итоглă занятисем активлă иртрĕ

ЙĔПРЕÇ. Мерчĕк вăрман участокĕнчи партгруппа çумĕнчи парти историне иккĕмĕш çул вĕренмелли кружокра итоглă занятисем пулса иртрĕç. Вĕренÿ çулĕнче кружокра пурĕ 24 занятисем иртернĕ, унта 11 çын вĕреннĕ. Кружока ертсе пыракан И. Ионов юлташ программăри юлашки темăсене вĕреннĕ вăхăтрах малтан вĕреннĕ материалсене аса илессине йĕркелерĕ. Вăл кашни вĕренекенпе тĕрлĕ ыйтусем тăрăх уйрăм калаçусем иртерчĕ. Итоглă занятисенче пропагандист лартнă ыйтусене кашни вĕренекен лайăх ответ пачĕ. Уйрăмах С. Полетаев, С. Михайлов, В. Ахматьев юлташсем калаçăва активлă хутшăнчĕç. Итоглă занятири калаçу хыççăн пропагандист вĕренекенсен отвечĕсене пĕтĕçтерчĕ, вĕсене парти вĕренĕвĕн çитес çулĕнче те кăçалхи пекех тăрăшса вĕренме сĕнчĕ.

А. ИВАНОВА.

Ĕçре те, вĕренÿре те малта

ЕТĔРНЕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци çумĕнчи кружокпа хăйсем тĕллĕн вĕренекенсем вĕренÿ çулне аван вĕçлерĕç.

Коммунистсем тата партире тăман активри 19 çын кружокра, 4 çын хăйсем тĕллĕн вĕренчĕç. Вĕренекенсем итоглă занятири калаçура хăйсем вĕреннĕ материала аван пĕлнине кăтартрĕç. Уйрăмах И. Тимофеев, Н. Тимофеев, Н. Краснова, М. Григорьев коммунистсем ыйтусене лайăх ответлерĕç.

Вĕренни пирĕн колхоз активне нумай пулăшрĕ. Кăçал пирĕн колхозри актив вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕçлет. Кăçал 100 гектар ыраш калчине апат патăмăр, 60 тонна минераллă удобренисем илсе килсе уя сапрăмăр. 3-мĕш бригада кăçал пур тырпула та агротехника хушнă пек акса хăварчĕ, вăл гектартан 19 центнер тырă туса илессишĕн кĕрешет.

Коммунистсен вĕренĕвне К. И. Мокеев ертсе пычĕ.

В. ЗАХАРОВ,
КПСС членĕ.

Çĕнĕ библиотекăсем

КУСЛАВККА. Районта культурăпа сутĕç учрежденийĕсен хисепĕ çултан-çул ÿссе пырать. Пĕлтĕр Муркарта тата Сÿлти Выселкăра çĕнĕ библиотекăсем уçрĕç. Кăçал Мĕниçырминче ялти библиотека ĕçлеме пуçларĕ. Çитес çывăх вăхăтра Мăрсакассинче тата Пакăшра библиотекăсем уçма хатĕрлеççĕ.

Халĕ районта 15 клуб, 10 вулав çурчĕ тата 6 библиотека ĕçлет.

(Хамăр инф.).

Республикăри çулсем тăрăх

Çул-йĕр мастерĕ

Совет çĕршывĕнче халăх умĕнче мухтава тухнă кирек хăш çынна илсен те, вăл чи малтан хăйĕн ĕçне чун-чĕререн парăннипе, ăна тарăннăн юратнипе, ĕçре ÿсме тата çынсене те вĕрентме тăрăшнипе палăрса тăрать.

Çĕрпÿри 243-мĕш номерлĕ çул-йĕр участокĕн 4-мĕш дистанцийĕн мастерĕ Николай Михайлович Слесарев юлташ çинчен сăмах хускатсан та, çул-йĕр работникĕсем тата таврари колхозниксем ăна пурте пĕр пек хак параççĕ:

— Çул-йĕр ĕçне чунтан парăннă çын.

Слесарев юлташăн ĕçлĕ кун-çулĕ Канашпа Шупашкар хушшинчи çула тунă историпе таччăн çыхăнса тăрать. Сталинла пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн пирвайхи çулĕнче вăл çак çул çине мастер пулма кĕнĕ те, унтанпа 26 çул хушши ĕнтĕ пĕр улшăнмасăр ĕçлет.

Ун чухне 40 километр тăршшĕ пулнă дистанцире çĕнĕрен чул сартарма пысăк йывăрлăхсем тÿсмелле пулнă. Çул-йĕр ĕçĕн техникине лайăх пĕлекен квалификациллĕ рабочисем çитмен.

Слесарев юлташа та тăтăшах вĕренме сĕннĕ, ик-виçĕ уйăхлăх е çурçуллăх курссене янă. Вăл пĕр хутĕнче те хирĕçлесе тăман, вĕренсе таврăнă та хăйĕнпе пĕрле ĕçлекенсене вĕрентме тытăннă.

Питĕ кламлĕ-çке Канашпа Шупашкар хушшинчи çул çулахи уйăхсенче. Икĕ айккипе ÿссе çитĕннĕ симĕс вăрман тăрăхĕ сулçÿренсене хĕлле çил-тăманран, çулла шăрăхран хÿтĕлет.

Слесарев юлташ çак вăрман тăрăхне лартас ĕçре пулнă. Курсран вĕренсе таврăннă хыççăн ăна прораб пулма уйăрса лартнă. Ун чухне ку таврара çĕçенхирлĕ вырăнсенче вăрман тăрăхĕ чĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен опытлă çын пулман, хăшпĕрисем тата ку ĕç ăнăçлă пулассине те ĕненмен. Халĕ, çитĕнсе çитнĕ вăрман тăрăхĕсене курсан, пирвайхи кĕрешÿре çăмăл пулманнине уççăнах туйса илетĕн.

Слесарев юлташпа вăл кăнтăрлахи апата таврăннă самантра тĕл пултăмăр. 55 çула çитнĕ мастерăн сÿçĕсем самаях кăвакарнă, питçăмартисенче пĕркеленчĕксем палăраççĕ, анчах куçĕсем, çамрăк çыннăнни пекех, витĕр пăхаççĕ.

— Çапла, 26 çул иртрĕ,— терĕ вăл, йăвашшăн пăхса.— Ватăлатпăр та пулĕ. Çул-йĕр мастерĕ пулса ĕçлеме тытăннă çул Володя ятлă ывăлăм çуралчĕ. Ÿсрĕ, çитĕнчĕ, ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухрĕ, халĕ кунтах, Шăхасан МТС-ĕнче главнăй агроном пулса ĕçлет тата хăй те çемьеллĕ пулчĕ. А эпĕ, акă, çав çавах мастер. Çулсем иртеççĕ, анчах ваталас килмест. Умра тата пысăкрах ĕçсем тăраççĕ-ха.

Николай Михайлович ертсе пыракан дистанци коллективĕ çул-йĕр строительстви планне çулленех иртерсе тултарать. 1952 çулта, планпа 1,5 километр вырăнне, 2,25 километр çинче чул сарнă. Вĕтетнĕ чула çĕр кăмрăк сăмалипе хытарса çул çине сарасси питĕ кăткăс ĕç. Анчах вĕсем пĕр километр вырăнне, 1,25 километр тăршшĕ сарнă.

Кăçалхи плансем тата пысăкрах. Виçĕ километр çинчи чула пăсса çĕнĕрен сармалла, çавăн тăршшех çул çине сăмалапа хытармалла.

— Кунтан пысăкрах заданисене пурнăçлама вăй çитернĕ пулсан, кăçалхи плана тултаратпăрах ĕнтĕ,— татса каларĕ мастер.

Ĕçпе мухтава тухнă совет çыннисен пĕр паллă енĕ пур: вĕсем хăйсем çинчен калаçа кăтартма питех ухата мар, лайăх ĕçлекен юлташĕсем çинчен пулсан, тĕпĕ-йĕрĕпех пĕлтерме хатĕр. Слесарев юлташ та, кăçалхи плана тултарасси çинчен сăмах пуçарсан, дистанцире ĕçлекен çул-йĕр работникĕсемпе колхозниксем çинчен йĕркипе калама тытăнчĕ.

— Çул çине тухсассăн эсир Канаш районĕнчи «Красная пламя» колхозри çул-йĕр бригадирĕпе Пелагея Григорьевна Волковăпа паллашăр,— терĕ вăл.— Чи ăста бригадирсенчен пĕри вăл, мастерпа танлашать, кăçалхипе 10-мĕш çул ĕçлет. Ун çинчен пĕр калав çырма та пулĕччĕ.

Слесарев юлташ кăçалхипе 20 çул ĕçлекен ремонтер Антон Андреевич Андреев, Шăхасан районĕнчи «Заря» колхозри 8-мĕш çул ĕçлекен бригадир М. Григорьева юлташсем çинчен каласа кăтартрĕ.

Çул-йĕр бригадирĕсем мастерăн чи çывăх помощникĕсем тата юлташĕсем. Вĕсемпе вăл çулталăк тăршшĕпех çыхăну тытать, бригадирсене пулăшу кирлĕ пулсан, мастер кирек хăçан та хатĕр.

Слесарев мастерăн дистанцийĕнчи çул-йĕр строительствинче Шăхасан районĕнчен 14, Канаш районĕнчен 3 колхоз ĕçлеççĕ. Кăçалхи февраль уйăхĕнчех мастер çав колхозсенчи çул-йĕр бригадирĕсене пухса канашлу иртернĕ. Унта вĕсем кашни бригадăн кăçалхи производство планне пăхса тухнă, ăна ăнăçлăн пурнăçламалли майсем çинчен сÿтсе явнă. Юлашкинчен икĕ районти бригадирсем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме килĕшсе, социализмла ăмăрту договорĕсем çине алă пуснă.

Чылай бригадăсем çул юсама май уйăхĕнчех йышлăн тухрĕç, ăмăртура мала тухассишĕн пыракан кĕрешÿ аслă çул çине куçрĕ. Хăш бригада мĕнле тухăçлăхпа ĕçленине мастер ремонтерсем урлă куллен асăрхаса тăрать, ĕçе тĕрĕс организацилеме пулăшать.

Канаш районĕнчи «Мотор» колхозри П. Андреев юлташ ертсе пыракан бригада çул юсама йышлăн тухнă, анчах çĕр чавассипе вăл ытти бригадăсенчен юлма пуçланă. Мастер ку бригадăна çитсе, унта ĕçе тĕрĕс мар йĕркеленине палăртнă.

— Эсир пĕр шăтăкран çавăн пек ушкăнпа тăпра кăларса пĕр-пĕрне чăрмантаратăр тата кам мĕн чухлĕ ĕçленине пĕлме пултараймастăр,—тенĕ вăл.

Йăнăша тÿрлетнĕ, икшер-виçшер çын уйрăм лаптăксем çинчен çĕр чавса купалама тытăнсан ĕç тухăçлăхĕ палăрмаллах ÿснĕ тата кашнин ĕçне уйрăммăн шута илме май пулса тăнă.

Çул-йĕр строительстви планне вăхăтра тултарассине, çулсене хĕлĕн-çăвĕн лайăх тытассине яланлăх çул-йĕр бригадисем татса пăраççĕ. Слесарев мастерăн дистанцийĕнчи çул çуркунне шыв кайнă чухнехисĕр пуçне, ытти вăхăтра çулталăк тăршшĕпех автомашинăсем çÿреме юрăхлă.

— Унран нимех те тĕлĕнмелли çук,— тет Слесарев юлташ.—Хĕллехи вăхăтра яланлăх бригадăсем хăйсем сумне çирĕплетнĕ участоксене пĕр шит тарăнăш юр купаланма та памарĕç. Ытти дистанцисенче вара ĕç урăхла пулкаланă. Пĕрре юр çуса иртет, тепре тăман шăлать, машинăсем çÿрейми пулсан çеç çул-йĕр бригадисем çинчен аса илеççĕ. Бригадăна çĕнĕрен пухса иртернĕ вăхăтра çул çине юр тата ытларах купаланать. Тытăнаççĕ вара эрнипе юр хырса тасатма, анчах ниепле те тасатса ĕлкĕреймеççĕ.

Яланлăх бригадăсене çирĕплетнĕ, вĕсене ертсе пыма пултарулла çынсене уйăрса лартнă колхозсем çул-йĕр строительствине çулталăк тăршшĕпех хутшăнаççĕ.

— Куртăр пулĕ, пирĕн дистанцире çулăн икĕ айккипе çĕршер кубометр хăйăрпа чул запасĕсем сыхланса выртаççĕ. Чăн та, вăл запасран чылай пайне государство машинисемпе турттарса хунă. Анчах колхозсем турттарни те сахал мар. Çитес вăхăтра çул юсама кирлĕ хăйăра паян ыранах хатĕрлесе çитеретпĕр. Кун хыççăн та хăйăрпа чул хатĕрлес ĕç чарăнмасть.

— Николай Михайлович малашнехишĕн тăрăшакан опытлă мастер, — теççĕ çул-йĕр работникĕсем.

Çапла, Слесарев юлташăн ĕçри опытĕнче чи малтан вăл малашнехине курса тăнине, çул-йĕр строительстви планĕсем пĕр чăрмавсăр пурнăçланмалла тăвассишĕн малтанах пур енлĕ мерăсем йышăнма тăрăшнине палăртма пулать.

Иртнĕ кĕркунне йĕпе-сапа çанталăк вăраха тăсăлчĕ. Канашри автотранспорт кантурĕн автомашинисемпе вăл кунсенче ниçтах та тухса çÿреймен.

— Çул хĕррине хăйăр турттарса парăр,—ыйтнă Слесарев юлташ.

Çанталăк шăнтса пур çулсем тăрăх та çÿреме май пуличчен автомашинăсемпе çул хĕррине хăйăр турттарнă.

— Кăçалхи плана тултарма пĕр çăмăллăх пулчĕ те,—ăшшăн кулса илчĕ вата мастер.—Халĕ ĕнтĕ çитес çулхи план çинчен шутлас пулать.

3-мĕш дистанцире çул-йĕр строительстви пысăк йĕркелĕхпе пуçланчĕ. Иртнĕ çулхи пекех, кăçал та Канаш районĕнчи «Красная пламя» колхоз членĕсем чи лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ. Çул-йĕр бригадин бригадирĕ Пелагея Волкова, çул-йĕр строительстви планĕсене çулленех иртерсе тултарнăшăн виçĕ хутчен Хисеп грамотипе наградăланăскер, кăçал та çул-йĕр ĕçĕсен планне чи малтан тултарассишĕн вăйне хурса тăрăшать.

Ку бригадăн 550 метр çинчи чула пăсса çĕнĕрен сарса тухмалла. Тăвай районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне йышăнса, «Красное пламя» колхоз членĕсем хăйсен планне виçĕ эрне хушшинче тултарма йышăннă. Халĕ çул çинче 30 çын суран, 45 çын лавпа ĕçлеççĕ.

Çул-йĕр строительствинчи социализмла ăмăртăва пуçарса пыракансем — коммунистсемпе комсомолецсем. Вĕсене куллен пулăшаканĕ — ватă мастер Николай Михайлович Слесарев юлташ.

Н. ВОЛКОВ.

Шăхасан.

МЕТЕОРИТ ÿКНĔ

Кăçалхи январь уйăхĕнче Мордва республикине пысăк метеорит ÿкнĕ. Унта пурăнакансенчен нумайăшĕ çап çутă шар вĕçсе пынине курнă, вăл хĕвелтухăç енчен хĕвеланăç енне питĕ хăвăрт вĕçсе иртнĕ. Метеорита сăнакансенчен хăшпĕрисем вăл саланса кайнине те курнă. Метеорит саланса кайнă чухне темиçе тупăпа пĕр харăс пенĕ чухнехи пек вăйлă сасă илтĕннĕ.

ССР Союзĕнчи Наукăсен Академийĕ çав метеорит хăш тĕле ÿкнине шыраса тупас тесе унта ученăйсем янă. Ученăйсем, метеорит ÿкнине куракансемпе калаçса, çав метеорит çинчен сведенисем пухаççĕ. Пухнă сведенисем тăрăх метеорит пайĕсем ăçта ÿкнине шыраса тупма пулать.

Пысăк метеоритсем сайра хутра çеç ÿкеççĕ. 1918 çулта кĕркунне Саратов хули çывăхне пысăк метеорит ÿкнĕ. Ăна малтан Чистай хули таврашĕнче пурăнакансем, унтан Куйбышев çывăхĕнчисем курнă. Метеорит ÿкнĕ вырăнти ялсенче пурăнакансем вăйлă аслати сасси илтнĕ. Саратов çывăхĕнче метеор ÿкнине питĕ нумай çын курнă, мĕншĕн тесен вăл кăнтăрла ÿкнĕ.

КАШНИ КОЛХОЗРА СИМĔС КОНВЕЙЕР ПУЛТĂР

Тырпул тухăçлăхне малалла ÿстересси, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне ÿстерсе пырасси — пирĕн ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕп задача. Выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерсе пынă вăхăтрах унăн тухăçлăхне те ÿстерме выльăх апачĕ çителĕклĕ пулни, выльăхсене ăшă витесенче хĕл каçарни, лайăх пăхса усрани кирлĕ.

Пирĕн республикăри колхозсен выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлес ыйтăва мĕнле пурнăçламалла? Ку тĕлĕшпе Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз опычĕ питĕ паха. Çак колхозра, малта пыракан ытти чылай колхозсенчи пекех, выльăх-чĕрлĕхе хĕлле те, çулла та—çулталăкĕпех лайăх апатпа усраççĕ. Лайăх апатпа тăрантарса тата лайăх пăхса усракан выльăх-чĕрлĕх пысăк тупăш парать.

«Гвардеец» колхозра çавăн пекех малта пыракан ытти чылай колхозсенче те, çуллахи вăхăтра выльăхсем валли симĕс апат çителĕклĕ хатĕрлеме симĕс конвейер организацилеççĕ, выльăхсене симĕс ыраш, нумай çул ÿсекен тата пĕр çул ÿсекен курăксем çулса çитереççĕ. Кунпа пĕрлех çак колхозсенче выльăхсене хĕлле çитерме пур тĕрлĕ апат та çителĕклĕ хатĕрлеççĕ.

Н. А. Рыбаков юлташ («Гвардеец» колхоз председателĕн заместителĕ) тата Ю. Шапошников юлташ (Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхозри зоотехник) колхозсем выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлес ыйтăва мĕнле татса пани, уйрăммăн илсен симĕс конвейер туса усă курни çинчен кĕскен каласа параççĕ.

Малта пыракансен опытне пур колхозсене те сарасси—питĕ кирлĕ ĕç. Çитес çулта кашни колхозра симĕс конвейер пултăр!—çак задачăна пурнăçламаллах. Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлессишĕн кашни колхозра куллен-кун кĕрешмелле.

Тутă выльăх-чĕрлĕх пысăк тупăш парать

Колхоз хуçалăхĕ хăвăрт ÿссе пытăр тесен, ăна пур енĕпе те аталантармалла. Вăйлă тырпулшăн кĕрешнипе пĕрлех, обществăлла выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе тухăçлăхне ÿстерессишĕн те кĕрешмелле.

Пирĕн «Гвардеец» колхоз чылай çул хушши ĕнтĕ вăйлă тырпул туса илет. Апла пулсан та выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси кая юлса пынă. Çавăнпа колхоз хуçалăхĕн тĕп отраслĕсем пĕр-пĕрне аталанма пулăшса пырайман.

Выльăх ĕрчетесси вĕсене тăрантарса усрама апат çителĕклĕ пулнинчен нумай килет. Пирĕн колхоз, улăх-çаран çук пирки, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе лайăх тăрантса усрама кирлĕ таран апат туса илеймен. Хĕлле вĕсене улăм çитересе усранă. Çулла вара, çĕртме пуссине ир сухаланă пирки, кĕтÿсене ниçта çÿретме çукчĕ.

Çак йывăрлăхсенчен хăтăлас тесе, колхоз 1949 çулта выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе татăклă улшăну тума шутларĕ. Уй-хирсенчен пысăк тухăçлă тырпул, нумай çул ÿсекен курăк ути пуçтарса [illegible], выльăх апачĕ акса тумалли 8 уйлă пусă çаврăнăшĕ турăмăр. Вăл пусăрах, симĕс конвейер туса, обществăлла выльăхсен кĕтĕвĕсене çÿретме пуçларăмăр тата тымарçимĕçсемпе силослăх культурăсем çителĕклĕ таран акса илетпĕр.

Выльăх апачĕ туса илмелли пусă çаврăнăшĕнчи кашни уй, вăтаммăн шутласан, 18 гектарлă. Çак уйсене нумай çул, пĕр çул ÿсекен курăксем, силослăх культурăсем, тымарçимĕçсем акатпăр. Нумай çул ÿсекен курăксемпе 3—4 çул хушши усă курмалла. Çавăнпа эпир кунта 4 тĕрлĕ курăк хутăштарса (люцерна, клевер, улăхра ÿсекен тимофеевкăпа овсяница) акатпăр. Кун пек акнин усси пысăк. Асăннă курăксенчен пĕрисем пĕр çулĕнче, теприсем тепĕр çулĕнче вăйлăрах аталаннă май, курăк кашни çулах çителĕклĕ ÿсет. Хутăштарса акнă вырăнта утă кашни çулах вăйлă пулать. Иртнĕ çулта кун пек вырăнта типĕтнĕ утă гектартан 55 центнер, чĕрĕ утă 152 центнер тухрĕ. Кăçал та унтан кая тухас çук.

Выльăх апачĕ акса тумалли пусă çаврăнăшне 1950 çулта йĕркелесе çитернĕ. Хальхи вăхăтра 3-мĕшпе 4-мĕш уйсенче кĕтÿ çÿрететпĕр. Кашни уйра хăш выльăхсене çÿретмеллине кăтартса панă. Сăмахран, пур тĕрлĕ курăксем те аван ÿсекен вырăна ĕнесене, клеверпа люцерна вăйлăрах лаптăка сыснасене, тимофеевкăпа овсяница лайăх ÿсекен вырăна сурăхсене яратпăр.

Тĕрлĕрен выльăхсене çирĕплетсе панă участоксене те уйрăм лаптăксене пайланă. Ĕнесене çÿретекен участок 3 пайран, сыснасене çÿретекенни 2 пайран тăрать. Кашни лаптăкра, курăк мĕнле аталаннине кура, ĕнесене 12 кун, сыснасене 15 кун çÿрететпĕр. Пĕр лаптăкри курăка çисе пĕтерсен выльăхсене тепĕр лаптăк çине куçаратпăр. Юлашки лаптăкрине çитерсе пĕтернĕ çĕре малтанхи лаптăкри курăк ÿссе çитĕнсе тепĕр хут кĕтÿ çÿретмелле пулать.

Хирти пусă çаврăнăшĕнчи 2-мĕш çул ÿсекен курăксене çулса пуçтарсан вĕсен каювĕ ÿсме пуçлать. Вара кĕтÿсене выльăх апачĕ туса илекен пусăран каю çитерме куçаратпăр. Курăк акнă вырăна сухалама пуçласан кĕтÿсене каллех выльăх апачĕ туса илекен пусă çаврăнăшне куçаратпăр.

Выльăх апачĕ туса илекен пусăра пирĕн резервра тăракан 5 гектарлă участок пур. Унта пилĕк тĕрлĕ курăк акнă. Ахаль чухне вăл участокра кăçалхи пăрусем çÿреççĕ. Пăрусем унти мĕнпур курăка çисе пĕтерейместĕ. Ытти кĕтÿсене çÿретекен вырăнти курăк çитмесен выльăхсене резерв участокне куçарса çитерме пуçлатпăр.

Кĕтÿсене хĕлле фермăра ĕçленĕ юлташсем пăхаççĕ. Вĕсене çулла та, хĕллехи пекех, ĕçкунĕ выльăхсен виçипе тупăшĕ хутшăннине шута илсе тÿлетпĕр. Вĕсем хăйсем пăхакан кĕтĕве çирĕплетсе панă участоксене лайăх пĕлеççĕ тата унпа тĕрĕс усă курса выльăхсен виçипе тупăшне ÿстерсе пыма тăрăшаççĕ.

Фермăри выльăхсене майăн 15-мĕшĕнче кĕтĕве ярса çитерме пуçланă. Уйччен хире усăлтармалла кăна кăларса çÿретнĕ. Çитерессе витесемпе картасенче тăрантса усранă.

Халĕ кашни кунах ирхине 7 сехетре кĕтĕве кăларса кăнтăрла 12 сехетчен çÿрететпĕр. Кĕтÿрен таврăнсан ĕнесене улăм пăтратса паратпăр. Кăнтăрла иртсен пĕр сехетре ĕнесене сăваççĕ. 2 сехет те 30 минутра каллех хире кĕтĕве яратпăр та, каçхине 7 сехетчен çÿрететпĕр. Малтанхи кунсенче каçхине сусан силос çитернĕ. (Пирĕн колхозăн силос июнĕн 1-мĕшĕнче тин пĕтнĕ). Халĕ ятарласа акнă ыраш калчине çулса паратпăр.

Сыснасем те кĕтÿре ирхине 7 сехетрен пуçласа 12 сехетчен çÿреççĕ. Кăнтăрла çĕрулми паратпăр. Вара кăнтăрла иртсен 3 сехетре кĕтĕве яратпăр та, 8 сехетчен çÿрететпĕр. Çăврăлă тата пĕтĕ сысна амисене тата самăртмалли сыснасемпе аçасене кĕтÿрен таврăнсан пĕçернĕ çĕрулмипе посыпка, ама шутне кĕменнисене — пĕçернĕ çĕрулми паратпăр.

Сурăхсене кĕтÿрен таврăнсан çуртырри улăмĕ çитеретпĕр.

Кăçалхи пăрусене кĕтĕве кăларма пуçламан-ха. Пысăкраххисене клевер ути, яшка пĕçерсе параççĕ, çамрăкраххисене уйăрнă сĕт, пăрçа çăмахĕ пĕçерсе çитереççĕ.

Пур выльăхсене те вĕсен виçине шута илсе апат паратпăр.

Халлĕхе выльăхсене кунне виççĕ — ирхине, кăнтăрла, каçхине шăваратпăр. Çанталăк шăрăх тăнă чухне, кĕтÿ çÿрекен вырăна таканасем лартса, выльăхсене ĕçес килнĕ чухлĕ шыв паратпăр. Ку тĕлĕшпе выльăх апачĕ акса тăвакан уйра ятарласа пусă чавса хатĕрленĕ.

Выльăхсем, тĕпрен илсен, кĕтÿре çÿресе тăранаççĕ. Апла пулсан та эпир вĕсене кĕтÿрен таврăнсан витере çу каçиччен апат паратпăр. Витере тăнă вăхăтра çулса çитерме ятарласа тĕрлĕрен курăксем акнă.

Пĕлтĕр колхоз хирти пусă çаврăнăшĕнчи 10 гектар çĕр çине çулса çитермелли ыраш акса хăварнă. Силос пĕтнĕ хыççăн эпир малтан çав ыраш калчине çулса çитерме пуçларăмăр. Вăл вунă кун çулса çитерме çитет.

Ун хыççăн выльăх апачĕ туса илекен пусăри клевер, люцерна, овсяница, тимофеевка хутăштарса акнă 19 гектарлă лаптăкри тата хирти пусă çаврăнăшĕнчи люцернăпа тимофеевка хутăштарса акнă 17 гектарлă лаптăкри курăка çулса пама пуçлатпăр. Ку лаптăксенчен 2.490 центнер курăк тухмалла. Вăл пире июнĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 10-мĕшĕччен çитет.

Вара выльăх апачĕ хатĕрлекен пусăри сĕлĕпе вика, сĕлĕпе пăрçа хушса акнă вырăна çулма пуçлатпăр. Ку 18 гектарлă лаптăк пире июлĕн 11—20-мĕшĕсенче çитерме çитмелле. Мĕнпур лаптăкран 880 центнер курăк тухмалла.

Июлĕн юлашки кунĕсенче выльăх апачĕ хатĕрлекен пусăри вунă гектар çинчи судан курăкне çулса çитеретпĕр.

Судан курăкне çитерсе пĕтернĕ çĕре хирти пусă çаврăнăшне акнă нумай çул ÿсекен курăксем пуçтарса илнĕ вырăнти курăк çитĕнсе тепĕр хут çулмалла пулать. Вăл пире август уйăхĕнче çулса çитерме çитет. Мĕншĕн тесен эпир унтан сахалтан та 2 пин центнер утă тухасса шанатпăр.

Сентябрĕн малтанхи вунă кунĕнче судан курăкĕн каюне тепĕр хут çулса пама пуçлатпăр. Судан курăкĕ хăвăрт ÿсет. Вăл иккĕмĕш хут çулнă чухне те гектартан 80 центнертан кая мар тухасса шанма пулать. Сентябрĕн 10—20-мĕшĕсенче каллех хирти пусă çаврăнăшĕнчи нумай çул ÿсекен курăксен каюне çулса çитеретпĕр. Иртнĕ çулсенчи опыт пире каю çулсан кашни гектартан 40 центнертан кая мар чĕрĕ утă тухнине кăтартса пачĕ.

Сентябрĕн 20—30-мĕшĕсенче сайралатма кăларакан выльăх кăшманне тата [illegible] кăларса çитерме тытăнатпăр. Кун пек çитерме эпир ятарласа 2 гектар çĕрулми лартса хăварнă. Октябрь уйăхне кĕрсен выльăх кăшманĕ, купăста çулçисене, хăяр, арбуз тунисене тата ыттисене те çитерме пуçлатпăр. Уй-хир бригадисем хуçалăхра усă курма юраман хĕрлĕ кăшман, кишĕр, çĕрулми тата ытти тымарçимĕçсене пĕтĕмпех фермăри выльăхсене çитерме параççĕ. Çапла вара пирĕн нимĕн те сая каймасть.

Шутласа пăхнă тăрăх, пирĕн фермăсенчи выльăхсем çу каçиччен кĕтÿре çÿренĕ тапхăрта хирте 6.260 центнер, витене таврăнсан 11.450 центнер чĕрĕ утă çиеççĕ. Ку вăл колхозăн мĕнпур выльăхне тутă усрама çителĕклĕ.

Выльăхсене тутă усрама пуçланăранпа вĕсенчен илекен тупăш та ÿсме пуçларĕ. Сăмахран, ĕнесем 1949 çулта 1.049-шар литр сĕт панă пулсан, 1952 çулта 1.909-шар литр панă. Вĕсем хĕлле те, çулла та пĕр тикĕс сĕт антараççĕ.

Анчах та эпир хамăрăн çитĕнÿсемпе лăпланса лармастпăр. Кăçал фермăра ĕçлекенсем кашни ĕнерен 2.300-шер литр сĕт суса илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. П. Заплаткина доярка хăйне çирĕплетсе панă 10 ĕнерен 820-шер литр сĕт суса илнĕ. М. Плешкова доярка та унран юласшăн мар.

Колхозри парти организацийĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем хушшинчи ăмăртăва куллен-кун вăйлатса пыма, вĕсен культурипе тавракурăмне ÿстерме тăрăшать, малта пыракансен опытне вĕрентсе çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать.

Артель членĕсем выльăхсене тăрантса усрассине аванлатнипе пĕрлех, вĕсене хупса усрама ăшă çурт-йĕрсем тăвас тĕлĕшпе те хастарлă ĕçлеççĕ. Строительсен бригади лаша ферми валли çĕнĕ вите туса хатĕрлет тата киввисене юсаса ăшăтать.

Выльăх апачĕ туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригада хăйне çирĕплетсе панă участокри пур культурăсене те пысăк тухăçлă туса илессишĕн, выльăхсене çулталăкĕпех тăрантарса усрама çителĕклĕ апат хатĕрлессишĕн кĕрешет.

Н. А. РЫБАКОВ,
Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз председателĕн заместителĕ.

Симĕс конвейерпа усă куратпăр

ÇĔРПŸ. «Новая жизнь» колхоз 1952 çулта обществăлла выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе паллă ĕçсем турĕ. Сăмахран, фермăри ĕнесен çулталăкри сĕт тухăçлăхне пирĕн дояркăсем 1.600 литра çитерчĕç. Çакă вăл пирĕн обществăлла хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстермелли пысăк резервсем пуррине кăтартса пачĕ.

Иртнĕ çулта эпир фермăри ĕнесене çуллахи вăхăтра симĕс апат пама тытăнтăмăр. Анчах ун пек апат валли культурăсем акнă çĕр лаптăкĕ сахалрах пулнă, çавăнпа симĕс апат çитмен. Эпир вара çав йăнăша кăçал тÿрлетме йышăнтăмăр.

Кăçал çуркунне выльăхсене симĕс апат çулса çитерме иртнĕ кĕркунне çĕртме пуссинчи 32 гектар çĕр çине ятарласа ыраш акса хăвартăмăр. Кăçалхи çуракинче çав тĕллевпех 15 гектар çине тĕрлĕ срокра викăпа сĕлĕ хутăштарса акрăмăр. Кусемсĕр пуçне, нумай çул ÿсекен курăк пуссинче 11 гектар уйăртăмăр.

Ыраш калчине тата курăксене пĕрин хыççăн тепĕрне çулса выльăхсене çитерсе, пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, чылаях ÿстерме пултарать.

Майăн 23-мĕшĕнче ĕнесене ыраш калчипе тăрантарма тытăнтăмăр. Ăна выльăх-чĕрлĕх апачĕ акса тăвакан бригадăри икĕ колхозник çулаççĕ те, фермăна кÿрсе параççĕ. Ку симĕс апата кашни ĕне пуçне 30—40-шер килограмм витере тăнă вăхăтра паратпăр.

Лайăхрах пăхнине кура пирĕн фермăри ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ кăçал палăрмаллах ÿсрĕ. Пирвайхи пилĕк уйăх хушшинче, иртнĕ çулхи çав вăхăтпа танлаштарсан, кашни ĕне пуçне 70-шер литр нумайрах сĕт суса илнĕ.

Симĕс апат пама тытăнсан çĕнĕ улшăну пулни курăнчĕ. Ыраш калчине çулса панă кунах ĕнесем сĕт тухăçлăхне 8 процент ÿстерчĕç, халĕ вăл малалла ÿссе пырать. Ку апата выльăхсем питĕ юратса çиеççĕ.

Ыраш калчине çулса выльăхсене çитерни халиччен пирĕн таврара пулман. Çавăнпа та колхозра ку меслет пирки хытах иккĕленекен çынсем те пулкаларĕç. «Сакăн пек лайăх калчана çулма мĕнле хĕрхенместĕр», терĕç вĕсем. Ун пек çынсене симĕс конвейер колхоза мĕн чухлĕ тупăш кÿни çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла пулчĕ.

Симĕс конвейерпа эпир кăçал çакăн пек йĕркепе усă куратпăр: майăн 23-мĕшĕнчен тытăнса июнĕн 10-мĕшне çитиччен выльăхсем валли ыраш калчине çулса тăтăмăр. Июнĕн 10-мĕшĕпе июлĕн 1-мĕшĕ хушшинче нумай çул ÿсекен курăксене çулса паратпăр. Кун хыççăн 20 кун хушши хутăш акнă викăпа сĕлле çулма тытăнатпăр. Июлĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса вунă кун хушши выльăхсене нумай çул ÿсекен курăксене çулса илнĕ участок çинче кĕтÿре çÿретме кăларатпăр. Август уйăхĕнче 20 кун хушши кĕтÿсене викăпа сĕлĕ çулса çитернĕ участок çине куçаратпăр. Сентябрь уйăхĕнче выльăхсене пама тымарçимĕç çулçисем çителĕклĕ пулаççĕ.

Колхоз ферминче кăçал 5 уйăх хушшинче 1.000 литр таран сĕт панă ĕнесем пур. Пирĕн задача мĕнпур ĕнесен сĕт тухăçлăхне çав шая çитересси тата унтан та иртересси. Симĕс конвейерпа анлăн усă курни пире çав задачăна татса пама пулăшĕ. Кăçал эпир государствăна сĕт-çу памалли задание срокчен тултарма, кун хыççăн колхозра çителĕклĕ расходлама тата колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх сĕт валеçсе пама тĕллев лартрăмăр.

Симĕс конвейер — пирĕн условисенче çĕнĕ ĕç. Унпа тĕрĕс усă курас задача лартса, эпир колхозри зоотехникăпа ветеринари курсĕнче çак темăпа ятарласа занятисем ирттертĕмĕр. Нумаях та пулмасть пирĕн колхозра Çĕрпÿри селекци станцийĕн наукăлла совечĕн ларăвĕ пулчĕ. Ку лару колхозăн обществăлла хуçалăхне аталантарас, вăл шутра выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçри чылай çитменлĕхсене уççăн палăртма пулăшрĕ.

Пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕх апачĕн çирĕп никĕсне тăвас тĕлĕшпе кăçал пысăк вăй хучĕ. Нумай çул ÿсекен курăксем акнă çĕр лаптăкĕ 240 гектара çитрĕ, çĕрулми 100 гектара яхăн лартнă, тымарçимĕçсене, силослăх культурăсене, пĕр çулхи курăксене агротехника тĕлĕшĕнчен чи лайăх срокра тата лайăх çемçетнĕ çĕр çине акса хăварнă.

[illegible], малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртни, çавна май выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хуни пире обществăлла выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхне ÿстерес ĕçре кăçал тата пысăкрах çитĕнÿ тума май парĕ.

Ю. ШАПОШНИКОВ,
колхозри зоотехник.

Силос хываççĕ

Выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе малта пыракан «Гвардеец» колхоз опычĕ республикăри ытти нумай колхозсенче анлăн саралать. Элĕк районĕнчи «Правда» колхозра нумай çул ÿсекен курăксене юр кайнă хыççăнах удобренисем сапса панă, пĕрремĕш хут çумласа тасатнă. Кăçал çуракинче тымар-çимĕçсемпе пĕр çул ÿсекен курăксене планран ирттерсе, кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа акса хăварнă.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе çуркунне çулса çитерме иртнĕ кĕркунне ятарласа ыраш акнă. Халĕ 10 кун хушши выльăхсене симĕс ыраш çитерчĕç. Ун хыççăн ыраш калчине çулса силос хывнă. Элĕк МТС-ĕн Малышкин юлташ ертсе пыракан трактор бригади силос турамалли машинăпа ĕçлесе 40 тонна силос хывса панă.

Кунтах трактор бригади июнĕн 10-мĕшĕнче нумай çул ÿсекен вăйлă çитĕннĕ курăксене çулма тытăннă. Колхозра çак курăксем кăçал иккĕмĕш хут çулмалăх çитĕнессе шанса тăраççĕ.

Красноармейски районĕнчи «Партизан» колхозра та механизаторсем силос культурисене тураса силос хываççĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра çак кунсенче нумай çул ÿсекен курăксене МТС машинисемпе çулса пухма тытăннă.

Агроном М. ЯНДИМИРКИН.

Çур çул планне срокчен пурнăçланă

Чăваш республикинчи колхозниксем, 1953 çулхи социализмла ăмăрту обязательствисене пурнăçласа, государствăна çăмарта хатĕрлесе памалли улттă уйăхри плана срокчен 107 процент тултарчĕç. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан колхозниксен хуçалăхĕсем кăçал государствăна пĕр миллион та 613 пин çăмарта ытларах хатĕрлесе панă. Государствăна çăмарта хатĕрлесе памалли çур çулти плана Красноармейски, Елчĕк, Муркаш, Элĕк, Калинино, Куславкка, Сĕнтĕр, Комсомольски районĕсенчи колхозниксем чылай ирттерсе пурнăçланă.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Районти колхозсем тата колхозниксен хуçалăхĕсем государствăна аш-какай, çăмарта хатĕрлесе памалли çур çул планне пĕр уйăх малтан тата ирттерсе тултарчĕç.

Иртнĕ çулта çак вăхăтра хатĕрленипе танлаштарсан, кăçал районти колхозсемпе колхозниксен хуçалăхĕсем хатĕрлев пункчĕсене аш-какай 80 центнер, çăмарта 290 пин штук ытларах леçсе панă.

Сысна ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă

ПЕРВОМАЙСКИ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн колхоз правленийĕ те, парторганизаци те куллен тăрăшаççĕ. Кашни уйăх вĕçĕнчех правлени ларăвĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе яваççĕ, ревкомисси членĕсем выльăх-чĕрлĕх шутне тата унтан илекен тупăша тĕрĕслесе тăраççĕ. Парти пухăвĕсенче ферма заведующийĕсен отчечĕсене итлеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш колхозри пĕтĕм тупăшăн пысăк пайĕ пулса тăчĕ.

Уйрăмах колхоз сысна ферминчен сахал мар тупăш илет.

Иртнĕ çул фермăри кашни сысна аминчен вăтам шутпа 11-шер çура илсе ÿстернĕ. Сысна çурисем чирлени тата вилни сахал пулнă. Колхоз сыснасем ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Халĕ фермăра, план тăрăх 250 пуç сысна пулмалла пулсан, 368 сысна шутланать.

Сыснасенчен тупăш нумай илме вĕсем валли лайăх условисем туса памалла. Пуринчен ытла сыснасене хĕллехи вăхăтра пăхнă чухне тимлĕн ĕçлемелле. Иртнĕ çулта колхоз сыснасем валли çителĕклĕ таран посыпка, 1.300 центнер çĕрулми, 150 тонна силос, пĕр тонна жмых хатĕрлесе хунă. Сыснасене çулталăкĕпех лайăх тăрантарса усраççĕ. Çак апатсене кунне 3 хут çитернĕ, ăшă шыв ĕçтернĕ.

Иртнĕ çулсенче кунта шыва тарăн çырмаран витрепе йăтнă. Халĕ шыв 2 кормокухньăна та пăрăхсем тăрăх пырать. Çакă вăл фермăра ĕçлекенсен ĕçне чылай çăмăллатать, тухăçлăрах ĕçлеме май парать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ăнăçу тăвасси кадрсенчен нумай килет. Çавăнпа та колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци фермăра çирĕп кадрсем пулмалла тăвассишĕн нумай ĕçлерĕç.

Халĕ сысна пăхакансем хăйсен ĕçĕсене юратса тăваççĕ, сыснасене тĕрĕс-тĕкел сыхласа усрассишĕн тăрăшаççĕ. М. Ефимова тата Л. Лаврентьева хĕрачасем фермăра пĕр улшăнмасăр 3—4 çул ĕçлеççĕ. Ферма заведующийĕ М. Ягупов юлташ хăй те сысна фермин заведующийĕ пулса тăххăрмĕш çул ĕçлет.

— Пирĕн фермăра ĕçлекенсем, социализмла ăмăртăва хутшăнса, кăçал кашни сысна аминчен 14-шар çура илсе ÿстерме обязательство йышăнчĕç. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне ĕçре пурнăçлама тăрăшаççĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне эпир кашни сысна аминчен вăтам шутпа 7-шер çура илтĕмĕр. Пирĕн халĕ сысна аминчен вăтам шутпа 14-шар çура ытларах илме шанчăк пур,—тет М. Ягупов юлташ.

Нумаях та пулмасть колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем зоотехникăпа вĕренмелли курсран экзамен парса вĕренсе тухрĕç. Çак экзаменсенче пуринчен ытла сысна ферминче ĕçлекенсем лайăх пĕлни курăнчĕ.

Колхоз сысна ферминчен кăçал пысăк тупăш илме палăртнă. Кăçалхи çулшăн государствăна сысна ашĕ памалли плана ирттерсе тултарнă. План тăрăх государствăна сысна ашĕ 19 центнер памалла пулнă пулсан, 26 центнер ытла панă. Пасарта сысна ашĕ сутса 1953 çулта 13 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Сысна ферминче ĕçлекенсем малтанхи çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Халĕ сысна витисене хĕле хатĕрлес ĕç пуçланчĕ. Колхозри строительство бригади сысна витине юсама тытăнчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх апачĕ тумалли тымарçимĕçсене колхоз планран ирттерсе акса хăварнă.

П. НИКОЛАЕВ.

„Гвардеец" колхоз опычĕпе

ÇĔРПŸ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци усă пухура Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозăн обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçри опычĕ çинчен тĕплĕн сÿтсе яврĕ. Пухура уй-хир бригадисен бригадирĕсемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем те пулчĕç.

Кăçал Мичурин ячĕпе тăракан колхозра нумай çул ÿсекен курăксем 80 гектар акса плана тултарнă, пĕр çул ÿсекен курăксем 40 гектар акнă. 15 гектар тымарçимĕç, 13 гектар çине хĕвелçаврăнăшĕпе викăпа пĕрле хереслĕ майпа акнă. Халĕ силос хывмалли шăтăксене юсаççĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлеме ятарласа бригада уйăрнă. Ку бригадăна И. Николаев коммунист ертсе пырать. Бригада улăхри çарана çÿп-çапсенчен тасатрĕ.

Колхоз правленийĕ «Гвардеец» колхоз опычĕпе паллашма унта бригадирсене, ферма заведующийĕсене яма йышăннă.

Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне колхоз сĕт суса илес енĕпе районта 4-мĕш вырăн йышăнчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ку тĕлĕшпе кăçал районта та, республикăра та малти вырăна тухассишĕн вăй хурса тăрăшаççĕ.

Н. ПЕТРОВ.

Чкаловски районĕнчи „Гвардеец" колхозра

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: колхоз агрономĕ А. Е. Ефимов тата выльăх апачĕ хатĕрлекен бригада бригадирĕ М. П. Щукин симĕслех çулса выльăхсене çитерме акнă ыраш пуссинче (сулахай енчи ÿкерчĕк). Колхоз ферминчи ĕнесем нумай çул ÿсекен курăксем акнă пусăра,—ку вырăна выльăхсене çÿретме ятарласа уйăрнă (варринчи ÿкерчĕк). Пăру пăхнă çĕрте питĕ лайăх ĕçлекен колхозницăсем Л. Ф. Заплаткина (сулахайри) тата В. К. Перепелкина; вĕсем пăхакан пăрусем таса ÿсеççĕ (сылтăм енчи ÿкерчĕк).

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕсем.

Польшăра производствăлла çĕрĕç кооперативĕсен хисепĕ ÿсет

ВАРШАВА, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм Польшăри производствăлла çĕрĕç кооперативĕсен пĕрремĕш съезчĕ пулса иртнĕ хыççăн, производствăлла çĕрĕç кооперативĕсене пĕрлешме шутлакан хресченсен йышĕ ÿссе пырать. Кăçалхи 5 уйăх хушшинче çĕршыври производствăсенче çĕнĕрен 2.826 кооператив организациленĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕршывра пĕтĕмпе 7.682 производствăлла çĕрĕç кооперативĕ шутланать. Вĕсем 157 пин ытла хресчен хуçалăхĕсене пĕрлештерсе тăраççĕ.

Албанири ĕççыннисен производствăри çитĕнĕвĕсем

ТИРАНА, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Албанире тухса тăракан хаçатсем çĕршыври промышленность предприятийĕсемпе çĕнĕ стройкăсем май уйăхĕнчи производство планне тултарни тата ирттерсе тултарни çинчен пĕлтереççĕ. Сталин ячĕпе тăракан пир-авăр комбиначĕн коллективĕ кăçал иртнĕ çулхинчен 2,2 хут ытларах продукци туса кăларма палăртнă. Май уйăхĕнче вăл, иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, виçĕ хута яхăн ытларах продукци туса кăларнă. Комбинатра малта пыракан ткачиха Афровити Пашко, пĕр машинăпа ĕçлес вырăнне икĕ машинăпа ĕçлесе, кулленхи задание вăтам шутпа 260 процент тултарса пырать. Хава Челепия, Дрита Призрени тата ытти стахановкăсем пек ĕçлесе, чылай работницăсем вунултшар станокпа ĕçлеме тытăнаççĕ.

Перрика хулинче нефть тасатакан завод тунă çĕрте ĕçлекенсем май уйăхĕнчи плана 102 процент тултарни çинчен пĕлтернĕ. Тиранăри атă-пушмак фабрики плана 110 процент тултарнă.

Тиранăра çăм пир-авăр фабрики тăвас ĕç ăнăçлă пырать. Потоклă меслетпе тата Совет Союзĕнчи стахановецсен ытти ĕç меслечĕсемпе усă курса, май уйăхĕнчи строительство ĕçне кĕске вăхăт хушшинче пурнăçланă.

И. В. Сталин ячĕпе тăракан нефть комбиначĕн предприятийĕнчи Вели Алабея стахановец ертсе пыракан бригада çултаlăк планне тултарнă, халĕ 1954 çул шучĕпе ĕçлет.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ ХАЛĂХ ТВОРЧЕСТВИН ВЫСТАВКИНЕ УÇНĂ

ПРАГА, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Прагăра июнĕн 9-мĕшĕнче халăх творчествин выставкине уçнă.

Выставкăна заводсенчи, ялсенчи, шкулсенчи, ремесла училищисенчи тата Чехословакири çар чаçĕсенчи изобразительнăй искусство кружокĕсен ĕçĕсене тăратнă.

КАЛЬКУТТĂРА ИНДИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔ ХУШШИНЧЕ КУЛЬТУРĂЛЛĂ ÇЫХĂНУСЕМ ТЫТАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ОБЩЕСТВО ТУСА ХУНĂ

ДЕЛИ, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Калькуттăра вырăнти прогрессивлă общественность пуçарнипе Индипе Совет Союзĕ хушшинче культурăллă çыхăнусем тытас тĕлĕшпе ĕçлекен общество туса хунă. «Нейшнл геральд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Индири паллă ученăй—парламент членĕ Мегнад Саха доктор обществăна уçнă чухне саламлă сăмах каласа çапла пĕлтернĕ: «Совет Союзĕ наука, искусство, литература енĕпе кĕске вăхăт хушшинче чаплă çитĕнÿсем тунă. Совет Союзĕ çутçанталăк ресурсĕсене этемлĕхе пăханса тăма мобилизациленĕ, вăл çак ĕçре нимĕнле ют çĕршыв пулăшăвĕпе те усă курмасть».

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн юнерхи кăнтăрлахи ларăвĕнче докладсем тăрăх прениесем малалла пынă.

Лилиан Левин госпожа Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче миршĕн кĕрешни çинчен каласа панă, Пĕтĕм тĕнчере мир туса хума, тенĕ вăл, халăхсем пĕр-пĕрне ăнлании, мĕнпур тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса пани кирлĕ.

Ларура çавăн пекех Швеци, Эквадор, Индонези, Сири, Бразили, Кăнтăр Африка, Бельги, Египет, Итали делегаткисем тухса каланă. Вĕсем хăйсен çĕршывĕсенчи хĕрарăмсем çĕнĕ вăрçа хатĕрленнине хирĕç, çар расхочĕсене хирĕç, хăйсен çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешни çинчен каласа панă.

Англи делегацийĕ сĕннипе конгресс Дани правительстви Демократиллĕ Корея Халăх Республикин, Демократиллĕ Вьетнам Республикин тата Малайя делегаткисене Дани çĕршывне пыма ирĕк паманшăн протест туса решени йышăннă.

Корея, Малайя тата Вьетнам делегацийĕсем хăйсен делегачĕсен пленка çине сырса илнĕ сăмахĕсене ярса панă. Конгресс делегачĕсем çак сăмахсене итленĕ.

Конгресс пĕр шухăшлă пулса Демократиллĕ Корея Халăх Республики, Демократиллĕ Вьетнам Республики тата кĕрешекен Малайя делегацийĕсем патне салам яма решени йышăнать. Решенире вĕсене делегатсен шутне кĕртни çинчен тата конгресра пулнă, тесе шутламалла туни çинчен каланă.

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн юлашки ларăвĕ пулнă. Лару çурçĕр иртиччен пынă. Лару пуçламăшĕнче Рут Хермани конгресс ячĕпе конгресс ĕçне ăнăçлă ирттерме пулăшнă Данири мĕнпур хĕрарăмсемпе арçынсене тав тунă.

Тахăшĕ залра демократилле çамрăксен гимнне юрлама пуçлать. Делегатсемпе хăнасем ура çине тăрса пурте çак гимна юрлама тытăнаççĕ. «Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери мир!», «Эпир миршĕн тăратпăр!» тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕнеççĕ.

Кун хыççăн докладсем тăрăх Куба, Швейцари, Ливан, Дани делегачĕсем сăмах тухса калаççĕ.

Председатель пулса ертсе пыракан Мария Маддалена Росси (Итали) тĕрлĕ çĕршывсенчен конгресс ячĕпе килнĕ телеграммăсене вулаcа парать.

Мери Мейсон мандат комисси докладне туса парать. Вăл конгреса хатĕрленес ĕç 80 çĕршывра пулса иртни çинчен пĕлтерет. Конгресс ларăвĕсене 67 çĕршывран 1.863 çын хутшăннă. Вăл шутрăн: делегатсем 611 çын, хăнасем 1.187 çын, сăнакансем 65 çын. Конгресра Демократиллĕ Корея Халăх Республикин, Демократиллĕ Вьетнам Республикин тата Малайя делегацийĕсем пулайман, мĕншĕн тесен вĕсене конгреса пыма Дани влаçĕсем ирĕк паман. Триест, Саудовски Аравi, Сири, Панама, Перу, Камерун, Золотой Берег, Кени, Нигери, Çурçĕр Родези, Кăнтăр Родези, Англипе Египет Суданĕн делегачĕсем те конгреса хутшăнма пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсене хăйсен правительствисем çĕршывран тухса кайма ирĕк паман.

Çавăн хыççăн пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен прависем çинчен калакан деклараци проектне, Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери демократилле федерацийĕн ĕçне пулăшса тăрасси çинчен калакан резолюци проектне тата пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене чĕнсе каланине делегацисем тăрăх сÿтсе явса сасăланă.

Çак документсене пурте пĕр саслă пулса йышăннă.

Малалла конгресс реакцилле влаçсем миршĕн кĕрешекенсене хĕсĕрленине хирĕç протестлесе резолюци йышăннă. Кун хыççăн Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери демократилле федераци советне суйланă. Унта 66 çĕршыв представителĕсем кĕнĕ.

Совет хĕрарăмĕсенчен федераци советне Н. В. Попова, З. Н. Гагарина, Г. Н. Горошкова, Н. М. Парфенова, Л. И. Петрова юлташсем кĕнĕ.

Совет Хĕрарăмĕсен пĕтĕм тĕнчери демократилле федерацине Португалири, Венесуэлăри тата Тринидадри хĕрарăмсен организацийĕсене илнĕ.

Кун хыççăн конгресс Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ федераци исполкомне суйланă. Исполком председателĕ пулма Эжени Коттона, вице-председательсем пулма: Англи, Венгри, Германи, Египет, Инди, Испани, Итали, Китай, Нигери, США, СССР, Швеци, Япони представителĕсене суйланă.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери демократилле федерацийĕн генеральнăй секретарĕ пулма Мэри Клод Вайян-Кутюрье госпожана суйланă. Секретариата çавăн пекех Англи, Германи, Испани, Итали, Китай, США, СССР, Франци, Чехословаки представительницисене суйланă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ паян тăшмана 3 самолетне персе ÿкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран Корейăпа Китай делегацийĕ июнĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве парать. Унта çапла каланă:

«Июнĕн 11-мĕшĕнче икĕ енĕн штаб-офицерĕсен икĕ ушкăнĕн хупă ларăвĕсем пулса иртнĕ. Лару июнĕн 12-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре каллех пуçланать».

КОРЕЙĂРА ПЕРЕМИРИ ÇИНЧЕН ПЫРАКАН КАЛАÇУСЕМ ПИРКИ

ПРАГА, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки республикин правительстви Китай Халăх Республикин, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствисем ыйтнине ответлесе, Паньмыньчжоньра июнĕн 8-мĕшĕнче алă пусса йышăннă килĕшÿ тăрăх нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен тума палăртнă, репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие хăйĕн представителĕсене яма килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Швеци США государство департаментне ярса панă нотăра Паньмыньчжоньра тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе алă пусса йышăннă килĕшÿ условийĕсем тăрăх репатриаци тĕлĕшпе ĕçлеме нейтральнăй çĕршывсенчен уйăракан комиссие хăй кĕме килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

АМЕРИКА БИРЖИСЕНЧЕ АКЦИСЕН ХАКĔ ЙÿНЕЛЕТ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 9-мĕшĕнче биржăра акцисен хакĕ нихçанхинчен те ытларах йÿнелнĕ. Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ку вăл Корейăра перемири тума пултарни çинчен пĕлтернĕ пирки пулнă.

Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 9-мĕшĕнче биржăра шута илнĕ акцисен пĕтĕмĕш хакĕ 2,4 миллиард доллар чухлĕ чакнă. Акцин вăтам хакĕ 1952 çулхи октябрь уйăхĕ хыççăн пулнă чи йÿнĕ хакпа танлашнă.

Францири правительство кризисĕ

БИДО НАЦИ ПУХĂВĔНЧЕ КИРЛĔ ЧУХЛĔ ЫТЛАРАХĂШ САСĂ ИЛЕЙМЕН

ПАРИЖ, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Наци пухăвĕнче Жорж Бидона правительство йĕркелеме полномочисем парасси çинчен сасăланă чухне Жорж Бидо 313 сасă илнĕ. Ăна хирĕç 228 депутат сасăланă. Конституци тăрăх ытларахăш сасă пулма 314 сасă кирлĕ. Сакăн чухлĕ сасă илеймен пирки Наци пухăвĕ ăна правительство йĕркелеме полномочисем паман.

Республика президенчĕ паян парламентри ушкăнсен представителĕсене йышăнать. Çакăн хыççăн вăл министрсен совечĕн председателĕ пулма çĕнĕ кандидатура тăратать.

„РОССИЯ" ДИЗЕЛЬЭЛЕКТРОХОД

Çак кунсенче Атăл тăрăх Шупашкар тĕлĕнчен «Россия» дизельэлектроход иртсе кайрĕ. Вăл Мускавран Ростова пĕрремĕш хут каять.

«Россия»—Мускавпа Ростов хушшинче çÿреме ятарласа тунă çĕнĕ суднăсенчен пĕри. Вăл 360 пассажир тата 25—30 тонна таран груз илсе кайма пултарать. Дизельэлектроход çинче пассажирсене лайăх канма пур условисем те çителĕклĕ. Унта амбулатори, санитари каюти, ача амăшĕпе ачасен пÿлĕмĕ, душ, ваннăсем, механизациленĕ прачечнăй, парикмахерски, автоматлă телефон станцийĕ пур. Дизельэлектроходăн малти пайĕнче икĕ салон. Каютăсенче репродукторсем, электровентиляторсем пур. Коридорсемпе салонсенче тата ресторанра кăнтăрлахи пек çутатакан лампочкăсем çутатаççĕ. Кашни каютăра пассажирсен ăпалисене хумалли, çăвăнмалли вырăнсем пур.

Ресторанра апат-çимĕçе электричествăпа ĕçлекен кухньăран ятарласа тунă лифтсем тăрăх параççĕ. Апат-çимĕç продукчĕсене сыхласа усрама холодильниксем тунă.

Дизельэлектрохода çĕнĕ техника тăрăх тунă. Суднăна автоматсемпе тытса пыраççĕ. Капитан рубкăра ларса тĕрлĕ кнопкăсем çине пусса суднăна тытса пырать.

Дизельэлектрохода лайăх команда алline шанса панă. Унăн капитанĕ пулса М. И. Лазарев ĕçлет. Малтан вăл «Урицкий» теплоходăн пĕрремĕш штурманĕ пулнă. Кунта тăваттăмĕш штурман пулса хĕрарăм Л. В. Игонина ĕçлет. Командăра 8 коммунист, 11 комсомолец.

«Россия» дизельэлектроход Атăл тăрăх пĕрремĕш рейс тăвать. Ун çинче Куйбышеври киностуди кинооператорĕсем пыраççĕ. Вĕсем Мускав пилĕк тинĕс портĕ пулса тăнине кăтартакан документлă кинофильм ÿкереççĕ. Пассажирсем хушшинче Мускаврa тухакан хаçатсен корреспонденчĕсем те нумай.

Шупашкарта «Россия» дизельэлектроход çине пассажирсем нумайăн ларчĕç. Хăшĕ-пĕрисем суднăна лайăхрах курас сăлтавпах ларса кайрĕç.

«Россия» дизельэлектроход Атăлпа Дон хушшинчи шыв çулĕ çинчи чи лайăх та илемлĕ судно.

В. СТАНЮКОВ.
А. СТУДЕНЕЦКИЙ.



ÿКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: «Россия» дизельэлектроход капитанĕ М И. Лазарев тата Куйбышеври киностуди операторĕсем Г. Амировпа И. Шамсутдинов дизельэлектроход çинче (çÿлти ÿкерчĕк); «Россия» дизельэлектроход Шупашкар тĕлĕнче (аялти ÿкерчĕк).

А. КОСТИН фотоÿкерчĕкĕсем.

Китайри халăх представителĕсен вырăнти пухăвĕсен суйлавĕ

ПЕКИН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри хаçатсем тĕрлĕ районсенче халăх представителĕсен вырăнти пухăвĕсен суйлавне хатĕрленес ĕç сарăлса пыни çинчен çыраççĕ. «Гунженьжибао» хаçат çырнă тăрăх, пур провинцисемпе хуласенче те суйлав комиссийĕсем туса çитернĕ.

Хальхи вăхăтра пур çĕрте те пропаганда ĕçĕ сарăлса пырать.

Тĕп суйлав комиссийĕ кăтартса панă тăрăх, вулăссенчи, рабочисен поселокĕсенчи, хула районĕсенчи тата районсене пайланман хуласенчи халăх представителĕсен пухăвĕсен суйлавĕ май уйăхĕнчен пуçласа октябрь уйăхне çитиччен пырать, уезд центрĕсенче ноябрь уйăхĕнче пулать.

Çĕршыври 450 вырăнта, вăл шутра Пекинпа Шанхай хулисен районĕсенче суйлав пуçланнă ĕнтĕ.

«Женьминьжибао» хаçат Кăнтăр Хĕвелтухăç Китайри районсенче суйлав мĕнле пыни çинчен пĕлтерет.

Куннун ялĕнче (Сычуань провинцийĕнчи Нэйцзян уезчĕ) сасăлама пĕтĕм суйлавçăсенчен 91,6 проценчĕ хутшăннă. Халăх представителĕсен вырăнти пухăвĕсене лайăх çынсене суйлаççĕ. Сăмахран, Цзянцин уездĕнчи Шуанлун ялĕнчи халăх представителĕсен пухăвне суйланă 49 депутатран чи пысăк пайĕ çĕр реформи ирттерме активлă хутшăннă çынсем, ялхуçалăхĕнче малта пыракансем пулса тăраççĕ. Вĕсене халăх хисеплет, ĕçре пулăшса тăрать. Пухăва суйланă депутатсенчен чухăн хресченсем 32 çын, вăтам хресченсем 11 çын, суту-илÿ тăвакансем 3 çын, пĕр рабочи, пĕр ремесленник тата пуçламăш шкул учителĕ. Куннун ялĕнчи халăх представителĕсен пухăвне суйланă 45 депутатран 14 коммунист. Çак ялсенче депутата суйланă çынсем хушшинче хĕрарăмсем 20 процент ытла.

Кĕтнĕ хăнасем

(Куйбышев облаçĕнчен килнĕ çыру)

Пирĕн района Чăваш государство академи театрĕн артисчĕсем килмелле тенĕ хыпар май уйăхĕн пуçламăшĕнчех ялсене сарăлчĕ.

Чăваш академи театрĕн артисчĕсем иртнĕ çулта пирĕн районти чылай ялсенче пулчĕç. Вĕсем «Айдар» тата «Ялта» драмăсене лартса паначчĕ.

Артистсем кăçал пирĕн района çитсен чи малтан Аркадий Эсхельĕн «Висĕ туй» ятлă пьесине «Çĕнĕ пурнăç» колхозра лартса пачĕç. Çак спектакле Похвистнĕ хулинчи культура çуртĕнче те кăтартрĕç.

Культура çуртĕнче халăх тулли. Кĕрес текенсем татах та пур. Чăвашла пĕлмен вырăссем те билет илеççĕ те клубалла васкаççĕ. Ултă сехет çитиччен билетсем сутса пĕтерчĕç.

...Чаршав уçăлать. Сцена çинче илемлĕ ял. Çÿлĕ пÿртсен пысăк чÿречисем хĕвел пайăркисемпе çуталса лараççĕ. Инçетре кăвак пĕлĕт курăнать. Пĕр пÿрт умĕнче висĕ хĕрарăм—Праски, Укçине, Дарье кил хушшинчи ĕçсем çинчен калаçаççĕ.

Çапла пуçланать «Висĕ туй» пьесăн пĕрремĕш пайĕ.

Спектакль çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкийĕсене хирĕç кĕрешнине лайăх кăтартса парать.

Семен Чудеев салтакран таврăннă хыççăн, тăватă çул хушши колхозра тăрăшса ĕçленĕ. Вăл—чи лайăх бригадирсенчен пĕри пулнă. Анчах та каяфахпа, амăшĕн сăмахне итлесе, хăйĕн хуçалăхĕнче нумай ĕçленине пула бригадăри ĕççене япăхтарать.

Çакна хирĕç колхозри активлă çынсем—Георгий Журавлев, Васильев, Варук, Марье, Санюк тата ыттисем те кĕрешеççĕ. Вĕсем Чудеевпа хăйĕнпе те каласса пăхаççĕ, ун çинчен колхозри стена хаçачĕ çине те çыраççĕ.

Критика пулăшать. Чудеев хăйĕн йăнăшне ăнланать, колхозра тăрăшса ĕçлеме тытăнать. Спектакль висĕ туйпа — Чудеев, Бурлаков, Журавлев авланнипе вĕçленет.

Георгий Журавлев рольне Николай Степанов артист лайăх вылярĕ. Çавăн пекех Варук рольне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки Елена Шорникова, колхоз председателĕ рольне — РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш АССР халăх артисчĕ Борис Алексеев лайăх выляреç. П. Дмитриев художник декорацисене лайăх тунине тата Н. Фандеев композиторăн илемлĕ янăракан музыкине палăртса хăварма кирлĕ.

Чăваш государство академи театрĕ çак кунсенче Вăтам Эверкел, Кĕсĕн Упреел, Питтĕппаль, Стюххаль, Султангăл, Аршел ялĕсенче тата Похвистнĕ хулинче, «Висĕ туй» комедие кăтартнисĕр пуçне, Тарас Шевченкăн «Назар Стодоля» ятлă драмине лартса пачĕ.

Нумаях пулмасть районти «Сталин çулĕпе» хаçатра артистсем çинчен уйрăм страница пичетленсе тухрĕ. Ку страницăра районти ĕççыннисем пирĕн пата килнĕшĕн артистсене чĕререн тав тăваççĕ тата малашне те çирĕп çыхăну тытма ырă сунаççĕ.

Л. МАКСИМОВ.
С. ДАНИЛОВ.

Юрă праçникĕ умĕн

ЮРĂ КАЙРĔ ЯН ТА ЯН!

Грузовик çинчен ансан Петр Кузнецов районти культура çуртне, юлташĕ патне васкарĕ.

Коридора кĕрсенех усă сасăллă çамрăксем шăрантарса юрланине илтрĕ. Юрă сасси ăна хавaслантарса чуна çĕклерĕ.

— Хор юрлать. Юрă праçникне хатĕрленеççĕ,—шухăшларĕ Петр Кузнецов.

Райисполкомăн культурăпа çутĕç учрежденийĕсен пайĕн заведующийĕ Федосия Павлова пуçарнипе ялсенчи вулав çуртчĕсен заведующийĕсемпе хор руководителĕсен икĕ кунлăх семинарĕ пырать. Кузнецовăн çывăх тусĕ П. Русаков çĕнĕ юрăсем вĕрентет.

Савăнăçлă та хаваслă юрра итленĕ вăхăтра П. Кузнецов темиçе çул каярах пулнă ĕçе аса илчĕ.

...1934 çул. Хĕллехи каникул кунĕсем. П. Кузнецов ун чухне VIII-мĕш класра вĕренетчĕ. Пĕр каçхине сĕрме купăспа чăвашла кĕвĕсем каларĕ те, тумланса колхоз правленине васкарĕ. Унта хăйпе тантăшсем тата таврана паллă кĕслеç утмăл çулхи Егор Волков шашкăлла выляççĕ.

— Якур мучи, эсĕ искусство çынни. Ялта хор организацилесен унта хутшăнатăр ĕнтĕ?—терĕ П. Кузнецов.

— Хутшăнмасăр, пиччĕ аван. Анчах оркестр тусан тата авантарах пулĕччĕ,—терĕ ватă колхозник.

Вăхăт нумаях та иртмен, кашнинех хăйĕн музыка инструменчĕсене илсе пынă. Кузнецов сĕрме купăс, Якур мучи кĕсле, ыттисем килте тунă тăмра е урăх тĕрлĕ инструментсем илсе пынă. Правлени çуртĕнче «Шупашкар туйĕ», «Пирĕн урам анаталла», «Пирĕн униче шĕшкĕллĕх», «Килмен те курман Шупашкарне» кĕвĕсем шăранма пуçланă. Ĕç тухать, пуçламăшĕ пур. Кузнецова оркестр руководителĕ, Якур мучие староста тунă.

Тепĕр кунне кружока вунпĕр çын пухăннă: тăватă хĕр те çичĕ арçын. Халĕ ĕнтĕ оркестрпа пĕрле хор пулать. Анчах «Ялта—Якур, мирте—Мирун» тенĕ пек, кăмăлсăр çынсем те тĕл пулнă. Кружок членĕсем хĕрсе вĕреннĕ çĕре колхоз председателĕ Максимов пырса кĕнĕ те:

— Кам хушнă сире кунта туй тума? Тухса кайăр путексен пÿртне,—тесе хăваласа янă.

Путексем усракан пÿрт пĕчĕк те лутра пулнă. Анчах ĕçе хĕрÿллĕн тытăннă çынсен ĕмĕчĕ сÿнмен. Кружок членĕсем пÿрте хăйсенех çуса тасатса тăнă, занятисене йĕркеллĕ ирттернĕ. Çулла пулнă çĕре хор коллективĕ 22 çынна çитнĕ.

Çулла, районти смотрта, хор пĕрремĕш вырăна тухнă. Комисси П. Кузнецова костюм, Е. Волкова—кĕпе, хĕрсене кашнине тутăр парса парнелесен колхоз председателĕ Максимов чĕтайман, Кузнецов аллине пырса тытнă.

— Каçарăр мана? Сирĕн умăрта эпĕ питех те айăплине туйтăп,—тенĕ вăл.

Çакăн хыççăн Кузнецов организациленĕ хор коллективĕшĕн колхоз правлени çуртчĕ алăкĕ çеç мар, районти клубсемпе культура çурчĕн алăкĕсем те уçăлнă.

Çав çулах вĕсене республикăри олимпиадăра—Шупашкарта укса парса премиленĕ, радио тăрăх юрласа пама ирĕк панă.

Халĕ хор коллективĕн висĕ хисеплĕ грамота пур. Коллектив членĕсенчен чылайăшĕ хаклă парнесем илме тивĕçлĕ пулнă.

Вунтăхăр çул хушшинче коллектив теори енчен те, паха опыт пухас тĕлĕшпе те чылай пуянланчĕ. Малтан пĕр сасăпа—унисонлă, пĕчĕк туйăмлă юрăсем юрланинчен тăватă сасăллă, гармонилле, пысăк туйăмлă юрлакан коллектив пулса тăчĕ. Кружок членĕсем музыка çырăвĕн пуçламăш грамотине пĕлекен пулчĕç.

Кузнецов, хор коллективне пуçласа яракан тата руководителĕ, кăçал Мускаври Крупская ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри халăх творчествин çурчĕ çумĕнчи музыка теорине вĕрентекен курсран вĕренсе тухрĕ, диплом илчĕ.

Çак коллектив хăй ĕçленĕ вăхăтра художествăллă пултарулăх кружокĕсене ертсе пыракан кадрсем те вĕрентсе хатĕрлерĕ. Вĕсен шутне К. Иванов, Х. Кузнецов, А. Давыдов тата ыттисем те кĕреççĕ.

Баянист пулнă тата юрланă П. Русаков, П. Кузнецовăн чи çывăх тусĕ, Канашра, культура çуртĕнче художествăллă руководитель пулса ĕçлет.

Çавăнпа та халĕ, Петр Никифорович хăй вĕрентсе çитĕнтернĕ П. Русаков семинара килнисене çав тери илемлĕ юрлаттарнине илтсен, чĕтаймарĕ, алăка вăрттăн уçса пăхрĕ те каллех хупрĕ. Вăл çакна шăппăн турĕ пулин те Русаков ăна асăрхарĕ.

— Петр Никифорович! — савăнăçлăн чĕнчĕ вăл аллинчи баяне сĕтел çине хурса. Пурте алăк енне пăхрĕç. Зала пĕчĕкрех пÿллĕ, çивĕч куçлă çын ăшшăн кулса кĕчĕ.

Русаковпа Кузнецов ал тытса пĕр самант куçран-куç пăхса тăчĕç.

— Мĕнле хыпарпа, Петр Никифорович!

— Юрă праçникĕ сывхарать.

Манăн сĕрме купăс начартарах. Канашра мандолинăсем пур, терĕç. Çавна илмĕ килтĕм.

Русаков юрă вĕренме килнĕ çамрăксем çине ăшшăн пăхрĕ:

— Паллашăр,—терĕ вăл, — Шăхасан районĕнчи Тимĕрчкасси ялĕнчи хор кружокĕн руководителĕ Петр Никифорович Кузнецов. Юрă праçникне пур енчен те тăрăшса хатĕрленет, малти вырăна тухассишĕн кĕрешет.

— Пирĕн коллектив сирĕн çинчен тахçанах пĕлет, Петр Никифорович,—терĕ пĕр хĕрĕ.—Эпир те сирĕнтен юлмăпăр. Пирĕн колхозра та ăста юрлакансем нумай.

— Питĕ аван, хĕрĕм, питĕ аван. Пирĕн ялсенче ăста юрлакансем сахал мар. Пурнăçĕ лайăх. Тулăх пурнăçра юрлама та хавас. Юрă праçникĕ пирĕн халăх юрлама та, ташлама та ăстине кăтартса парĕ. Ну, юрĕ, чăрмантарас мар. Сывлăхпа ăнăçлăх сунатăп сире,—тесе вăл залран тухма васкарĕ.

Кузнецов мандолина илме магазина васкарĕ. Вăл урама тухсан культура çуртчĕн уçă кантăкĕнчен илемлĕ юра янрарĕ:

«Ялкăшать, çисет
Телейлĕ, çутă кун.
Пурăнатпăр чи илемлĕ
Аслă çĕршывра.
Ус, çĕршыв, хăватлăн
Пирĕн юрă янратăр ялан».
Юрă праçникĕ сывхарать.

П. СКВОРЦОВ.

Канаш хули.

Саман кирпĕч—йÿне ларакан строительство материалĕ

ЧКАЛОВСКИ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1952 çулта саман кирпĕчпе анлăн усă курма тытăнчĕ. Я. Кузнецов колхозник ертсе пыракан строительство бригади 1952 çулта 30 пин саман кирпĕч çапса хатĕрлерĕ. Çав кирпĕчрен тимĕрçĕ лаççи тата мастерской çурчĕ туса лартнă.

Хуралтсене техникăлла правилăсем тăрăх туса пынă, çавăнпа вĕсем çирĕп пулнă.

Кăçал строительство бригади 75 пин саман кирпĕч çапма обязательство илчĕ. Çав кирпĕчрен 200 пуç сурăх вырнаçмалăх вите, автомашина валли гараж та тата итем çинче двигатель будки тăваççĕ.

Ку ĕçсене тумашкăн колхоз правленийĕ строительство бригадине 40 колхозник уйăрнă, туртăм вăйĕ тата пĕр автомашина çирĕплетсе панă. Илнĕ обязательствăна пурнăçлама тăрăшса, бригада членĕсем хĕрÿллĕ ĕçлеççĕ. 20 колхозник саман кирпĕч çапать, хăшĕсем вăрмантан йывăç кÿреççĕ.

И. ТАРАСОВ.

Ачасен лагерĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод чугун çул çинче ĕçлекенсен ачисем валли Кĕçĕн Çавал хĕрринче лагерь уçрĕ. Унта шкул çулне çитмен ачасем канаççĕ. Лагерь июнĕн 5-мĕшĕнче ĕçлеме пуçларĕ.

Кашни сменăра 26 кун, кăçал пурĕ 540 ача канмалла.

И. ЖУРАВЛЕВ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи
Государство драма театрĕн
ГАСТРОЛĔСЕМ
«30 лет Чувашской АССР» клуб (Чапаевски поселок)
Июнĕн 20-мĕшĕнче—«Ночной звонок» (Д. Слепян комедийĕ).
Июнĕн 21-мĕшĕнче—«Поэма о любви» (Мусрепов драми).
Спектакльсем каçхине 9 сехетре пуçланаççĕ.
Билетсем июнĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа клубра сутаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00582 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.